им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

# КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Февраль
4
юнкун
№ 24 (8933)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

## Паянхи номерте:

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама тăратнă, округсенчи суйлав комиссийĕсем регистрациленĕ кандидатсен списокĕ (1—2 стр.).

СССР ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИНЧЕ (2 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: А. Антонова.—Лайăх ĕçлекен агитколлектив (2 стр.).

Н. Степанов.— Политехникăллă вĕренÿ çинчен (2 стр.).

Вырăх-чĕрлĕх пăхакансен 1952 çулхи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем (3 стр.).

В. Малышев. — Çитменлĕхсене пĕтерсе пыратпăр (3 стр.).

П. Капитонов. — Полиграфи предприятийĕсенче ăмăртăва вăйлатар (3 стр.).

Хĕвелтухăç Китайра ялхуçалăхĕнче тунă çитĕнÿсем (4 стр.).

Сталинград патĕнче çĕнтерÿ тунăранпа 10 çул çитнĕ май ют çĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Голландире шыв илни (4 стр.).

А. Артемьев.—Ача-пăча калавĕсем пирки. «Ялав» журнала пăхса тухнă май (4 стр.).

# Санитари пропагандине вăйлатар

Совет халăхĕн пурнăçĕ пĕрмаях лайăхланса, культурăллă шайĕ ÿссе пырать. «Халăхăн пурнăçĕ лайăхланса тата культури ÿссе пынă май,—терĕ Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă докладра,—халăха медицина пулăшăвĕ парасси лайăхланнă май, пирĕн çĕршывра çынсем вилесси чакрĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче халăх йышĕ 9 миллион та 500 пин çын чухлĕ хутшăнчĕ».

1952 çулта санитарипе профилактика ĕçĕсем малалла лайăхланса пычĕç. Медицина учрежденийĕсен шучĕ ÿссе пынă. Больницăсемпе ача çуратмалли çуртсенче койкăсен шучĕ. 1951 çулхипе танлаштарсан, 50 пин ытла ÿснĕ Врачсен йышĕ, 1951 çулхипе танлаштарсан, 14 пин çын хутшăннă.

Партин XIX-мĕш съезчĕ ССР Союзне 1951—1953 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче медицина учрежденийĕсен шутне, вĕсенчи койкăсен шутне нумай ÿстерме, вĕсене чи çĕнĕ оборудовани пама, вĕсен ĕçĕн культурине ÿстерме палăртнă.

Парти халăх сывлăхне сыхлас ĕç енĕпе кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн партипе совет, профсоюзпа комсомол органĕсем тата мĕнпур медицина работникĕсем çине тăрса кĕрешме тивĕçлĕ.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕç вăл — пархатарлă та хисеплĕ ĕç. Çак ĕçре, паллах ĕнтĕ, çынсене чир-чĕртен сыватакан учрежденисем питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа пĕрлех ĕççыннисене хăйсен сывлăхне сыхлама вĕрентес, санитарипе гигиена правилисене пурнăçласа пыма хăнăхтарас ĕçĕн—санитари пропагандин пĕлтерĕшĕ те пысăк.

Халăха санитарипе гигиена çинчен вĕрентес ĕçе Канаш хула Совет исполкомĕн сывлăх пайĕ начар мар организациленĕ. Хулари кашни врачăн ăçта тата хăçан мĕнле темăпа лекци вуласа памалли план пур. Врачсем хăйсен планĕсене пурнăçа кĕртнине медицина учрежденийĕсен руководителĕсем тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ. Вăтам пĕлÿллĕ медицина работникĕсем те чиртен сыхланасси çинчен халăх хушшинче калаçусем чылай ирттереççĕ. Йĕпреç районĕнче те санитари вĕрентĕвне лайăх йĕркелеме тăрăшаççĕ.

Пирĕн хаçатăн корреспонденчĕ çырса пĕлтернĕ тăрăх, Советски районĕнчи Тури Ачакри фельдшер пункчĕн заведующийĕ И. В. Копров юлташ халăх хушшинче час-часах калаçусем ирттерет, партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем çинчен, партипе правительство халăха сывлăхлă усрассишĕн тăрăшни, совет медицини çитĕнĕвĕсем çинчен каласа кăтартать. Вăл шкулта та час-час пулать, ачасен сывлăхне тĕрĕслет, вĕсене гигиена правилисене вĕрентет.

Анчах санитари пропагандине тăрăшса туса пыракансен ĕçри опычĕ пур çĕре те сарăлман-ха, чылай çĕрте çак ĕçе начар организациленĕ. Сĕнтĕр районĕнче уйрăм ялсене врачсем мар, фельдшерсемпе сестрасем те лекци е калаçу ирттерме çÿремеççĕ. Октябрьскипе Чкаловски районĕсенче тата ытти хăшпĕр çĕрте халăха санитарипе гигиена çинчен вĕрентес ĕçе хакламаççĕ.

Чăваш АССР Сывлăх министерстви те санитари пропагандине тивĕçлипе хакламасть.

Республикăри Санпросвет çурчĕпе районсенчи санитарипе эпидемиологи станцийĕсем çак ĕçре поликлиникăсемпе больницăсенчи санпросветорганизаторсем çине ытларах шанаççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр санпросветорганизаторсем пачах ĕçлемеççĕ. Санпросвет çурчĕ тĕрлĕ чир-чĕртен сыхланма вĕрентекен плакатсем тата пĕчĕк кĕнекесем кăларать. Анчах вĕсемпе мĕнле усă курнине никам та тĕрĕслесе тăмасть.

Санитари пропагандинчи тĕп çитменлĕх вăл—çак ĕçе кулленхи практикăллă задачăсемпе тачă çыхăнтарманни пулать. Пурнăç çултан-çул лайăхланса, халăх культури ÿссе пынă вăхăтра, пирĕн пурнăçра аваллантпа, патша саманинчен юлнă киревсĕр йăласем пĕтмен-ха. Чылай çемьесем халĕ те пĕр алшăллипе усă курассĕ, апата пурте пĕр тирĕкрен çиесçĕ, чылай чухне выртса канмалли вырăн таврашĕсем таса мар, пÿрт-çуртсене, кил тата урам хушшисене таса тытмасçĕ. Çаксем чир-чĕрсене сарăлма пулăшаççĕ. Вĕсене пĕтерме халăхăн йăлари культурине ÿстермелле. Çак задача вара пирĕн халăх хушшинче санитари пропагандине вăйлатма, хуласемпе ялсенчи тасалăха пĕрмаях тĕрĕслесе тăма, çитменлĕхсемпе киревсĕрлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыма хушать.

Медицина работникĕсем, хуласемпе районсенчи сывлăх пайĕсем, вырăнти Советсен яланхи комиссийĕсем, сануполномоченнăйсем, санитари комиссийĕсем пурте тăтăшах çине тăрса ĕçлесен, предприятисенче ĕç вырăнне таса тытнине, кил-çуртсенчи тасалăха, кĕпе-тумтире таса тытнине, ĕçре тата пурнăçра санитарипе гигиена правилисем мĕнле пурнăçланса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăрсан, чиртен сыхланма мĕнле мерăсем йышăнмалли çинчен ĕççыннисене тăтăшах вĕрентсе пырсан, пирĕн йăлари культура нумай ÿсет.

Медицина енĕпе çĕнĕ открытисем тăвас ĕçре вырăс ученăйĕсем яланах малта пыни çинчен, тĕнчере малта пыракан совет медицинин çитĕнĕвĕсем, çынсене чиртен сыватмалли паха майсемпе эмелсем, чиртен сыхланмалли майсем çинчен халăха ăнлантарса парасси санитари пропагандинче тĕп вырăнта тăмалла. Санитари пропагандин тĕллевĕ çапла: хуласемпе ялсенчи тасалăхшăн кĕрешсе, ĕççыннисене санитари правилисем çинчен, ĕçрипе йăлари гигиена çинчен вĕрентесси, кил-çурта, кĕпе-тумтире таса тытма хăнăхтарасси, çапла майпа çынсем чирлессине чакарасси, тĕрлĕ ерекен чирсем сарăлассине чарса лартасси пулать.

Халăха санитарипе гигиена çинчен ăнлантарса парас ĕçе пирĕн çĕршыври пурнăçпа, коммунизмлă общество тăвас задачăпа тачă çыхăнтарас пулать. Санитари пропагандине анлă сарни, халăха чиртен сыхланма, ĕçре тата пурнăçра таса, тирпейлĕ пулма вĕрентни совет çыннисен сывлăхне çирĕплетме, вĕсен ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăштăр.

Санитари пропагандин тĕп форми вăл — лекцисемпе калаçусем ирттересси. Вĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ шайра ирттермелле. Апла пулсан, лекторсен тезисĕсемпе конспекчĕсене тĕрĕслесси, вĕсен рефератĕсене лекторсен семинарĕсенче сÿтсе явасси яланах пулса пыма тивĕçлĕ. Кунсăр пуçне, сывлăха сыхлас ĕç работникĕсен врачсемпе лекторсем ирттерекен лекцисенче пулса, вĕсем мĕн каланине, ыйтусене мĕнле ăнлантарса панине итлес, ĕçри çитменлĕхсене тÿрлетме пулăшас пулать. Лекцисемпе калаçусен витĕмлĕхĕшĕн, пахалăхĕшĕн ытларах кĕрешни кирлĕ.

Клубсемпе вулав çурчĕсенче час-часах пĕр-пĕр чир ерессинчен сыхланма чĕнекен лозунгсем, листовкăсем çакăнса тăнине, сĕтелсем çинче чир-чĕре хирĕç кĕрешме вĕрентекен пĕчĕк кĕнекесем выртнине курма пулать. Вĕсене вулани ĕççыннисемшĕн усăллă. Çавăн пек листовкăсемпе плакатсем, выставкăсемпе витринăсем ытларах пулсан, вĕсем санитарипе тата гигиенăпа халăха паллаштарма нумай пулăшĕç. Тĕрлĕ чиртен сыхланма вĕрентекен кинофильмсем кăтартас ĕçе йĕркелени кирлĕ.

Санитари пропагандине лайăхлатма çак ĕçе медицина работникĕсене хутшăнтарнипех çитмест. Ку ĕçе хуларипе ялти мĕнпур культурăллă вăя, уйрăмах учительсене, активистсене йышлă хутшăнтарас пулать. Ку тĕлĕшпе районти сывлăх пайĕсен халăха вĕрентес ĕç тата культурăпа çутĕç пайĕсемпе, лекторсен ушкăнĕсемпе, Пĕтĕм Союзри политикăпа наука пĕлĕвĕсене сарас енĕпе ĕçлекен обществăн тата Хĕрлĕ Хĕрес обществин вырăнти уйрăмĕсемпе çыхăну тытмалла.

Санитари пропагандине ку чухнехи задачăсен çÿлĕшне çĕклесси çак ĕçпе парти тата совет органĕсем ытларах интересленнинчен килет. Вĕсен санитари пропагандипе çыхăннă ыйтусене сÿтсе явса, çак ĕçе лайăхлатма мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса памалла, практикăллă пулăшу парас ĕçе организацилемелле.

### *Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн*

## *УКАЗĔ*

### Л. Н. ЕЛИСТРАТОВАНА ЧĂВАШ АССР ШКУЛĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ УЧИТЕЛĔН ХИСЕПЛĔ ЯТНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН

Халăха вĕрентес ĕçре нумай çул хушши ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăллă ĕçе активлă хутшăннăшăн Сĕнтĕрвăррипчи вăрман техникумĕн преподавательницине Любовь Николаевна Елистратовăна Чăваш АССР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕн хисеплĕ ятне парас.

**Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.**

**Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн Д. МИТЬКОВ.**

Шупашкар хули, 1953 çулхи январĕн 31-мĕшĕ.

# Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама тăратнă, округсенчи суйлав комиссийĕсем регистрациленĕ кандидатсен

# СПИСОКĔ

Георгий Платонович **Платонов**, Чăваш АССР Финанс министерствин пай начальникĕ—1-мĕш суйлав округĕ.

Иван Филиппович **Филиппов**, Шупашкарти санитарипе эпидемиологи станцийĕн главнăй врачĕ—2-мĕш суйлав округĕ.

Анна Степановна **Шорникова**, Шупашкарти «Водосвет» трестĕн энергосбыт контролерĕ—3-мĕш суйлав округĕ.

Павел Лаврентьевич **Лебедев**, Чăваш ялхуçалăх институчĕн кафедра заведующийĕ—4-мĕш суйлав округĕ.

Григорий Иванович **Калинцев**, Чăваш ялхуçалăх институчĕн директорĕ—5-мĕш суйлав округĕ.

Николай Федоров **Пойда**, 713-мĕш çул эксплуатаци участокĕн начальникĕ — 6-мĕш суйлав округĕ.

Иван Васильевич **Благодатских**, Шупашкарти «Водосвет» трестĕн директорĕ—7-мĕш суйлав округĕ.

Константин Петрович **Горюнов**, государствăн Шупашкарти кирпĕч завочĕн директорĕ—8-мĕш суйлав округĕ.

Ксения Васильевна **Васильева**, государствăн Шупашкарти кирпĕч завочĕн работници—9-мĕш суйлав округĕ.

Раиса Лаврентьевна **Телегина**, Шупашкарти «Водосвет» трестĕн мотористки—10-мĕш суйлав округĕ.

Андриан Васильевич **Киселев**, ĕççынни депутачĕсен хула Совет исполкомĕн председатель заместителĕ—11-мĕш суйлав округĕ.

Виталий Степанович **Степанов**, тумтир çĕлекен 1-мĕш мастерскойăн мастерĕ—12-мĕш суйлав округĕ.

Анна Васильевна **Степанова**, килхуçи хĕрарăм—13-мĕш суйлав округĕ.

Сергей Васильевич **Букетов**, ликерпа эрех завочĕн шоферĕ—14-мĕш суйлав округĕ.

Евдокия Осиповна **Осипова**, ликерпа эрех заводĕнчи работница — 15-мĕш суйлав округĕ.

Константин Петрович **Ладин**, хула Совет исполкомĕн коммунальнăй хуçалăх пайĕн заведующийĕ—16-мĕш суйлав округĕ.

Александр Михайлович **Токарев**, Чăваш АССР Çутĕç министрĕ—17-мĕш суйлав округĕ.

Иван Васильевич **Сиднев**, республика больницин главнăй врачĕ — 18-мĕш суйлав округĕ.

Клавдия Борисовна **Деева**, хула Совет исполкомĕн социальнăй обеспечени пайĕн заведующийĕ—19-мĕш суйлав округĕ.

Лидия Александровна **Мышкина**, ĕççынни депутачĕсен хула Совет исполкомĕн секретарĕ—20-мĕш суйлав округĕ.

Мария Дмитриевна **Лупанова**, Чăвашпотребсоюз правленийĕн главнăй бухгалтерĕ—21-мĕш суйлав округĕ.

Анна Степановна **Ягодкина**, Чăваш облпрофсовет секретарĕ—22-мĕш суйлав округĕ.

Лина Николаевна **Жунова**, Шупашкарти çыхăну кантурĕн надсмотрщикĕ—23-мĕш суйлав округĕ.

Порфирий Николаевич **Кожендаев**, Шупашкар торгĕн директорĕ—24-мĕш суйлав округĕ.

Михаил Михайлович **Михайлов**, Шупашкарти «Кооператор» промысла артелĕн станочникĕ—25-мĕш суйлав округĕ.

Антонина Федоровна **Федорова**, 1-мĕш çăкăр завочĕн бракерĕ—26-мĕш суйлав округĕ.

Клавдия Яковлевна **Гаранина**, «Красный кустарь» промысла артелĕн инструкторĕ—27-мĕш суйлав округĕ.

Клавдия Александровна **Арзамасова** Шупашкарти ача больницин врачĕ—28-мĕш суйлав округĕ.

Вениамин Дмитриевич **Алфер**, ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ — 29-мĕш суйлав округĕ.

Николай Николаевич **Бобров**, Чăваш АССР Вырăнти промышленность министрĕ—30-мĕш суйлав округĕ.

Вера Федоровна **Симонова**, ĕççынни депутачĕсен хула Совет исполкомĕн культурăпа çутĕç пайĕн заведующийĕ — 31-мĕш суйлав округĕ.

Мария Петровна **Дерстуганова**, Шупашкарти çăкăр комбиначĕн работници—32-мĕш суйлав округĕ.

Борис Алексеевич **Алексеев**, Чăваш государство академи театрĕн артисчĕ—33-мĕш суйлав округĕ.

Евгений Алексеевич **Токмаков**, вырăссен республикăри драма театрĕн главнăй режиссерĕ—34-мĕш суйлав округĕ.

Августа Моисеевна **Спиридонова**, Шупашкарти художество училищин преподавателĕ—35-мĕш суйлав округĕ.

Клавдия Петровна **Ишмуратова**, чăлха фабрикинчи штопальщица — 36-мĕш суйлав округĕ.

Евгения Григорьевна **Тарасова**, хула Совет исполкомĕн финанс пайĕн заведующийĕ—37-мĕш суйлав округĕ.

Исаак Ильич **Ильин**, Шупашкарти пристань начальникĕн заместителĕ—38-мĕш суйлав округĕ.

Маргарита Васильевна **Васильева**, чăлха фабрикинчи сортировщица—39-мĕш суйлав округĕ.

Таисия Ивановна **Иванова**, Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрикин цех начальникĕ—40-мĕш суйлав округĕ.

Серафима Романовна **Ершова**, Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрикин мастерĕ—41-мĕш суйлав округĕ.

Александр Сергеевич **Старостин**, Шупашкарти энергетика техникумĕн преподавателĕ—42-мĕш суйлав округĕ.

Михаил Степанович **Степанов**, пир-авăр комбиначĕн ФЗО шкулĕнчи инструкторĕ—43-мĕш суйлав округĕ.

Юлия Петровна **Сапожникова**, пир-авăр комбинатĕнчи ровничница—44-мĕш суйлав округĕ.

Александр Федосеевич **Бекренев**, Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн директорĕ—45-мĕш суйлав округĕ.

Клавдия Степановна **Мефодьева**, пир-авăр комбинатĕнчи прядильщица—46-мĕш суйлав округĕ.

Петр Иванович **Захаркин**, «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн машинопрокатнăй базинчи мастер—47-мĕш суйлав округĕ.

Иван Данилович **Андрюшкин**, «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн платниксен бригадин бригадирĕ—48-мĕш суйлав округĕ.

Александр Семенович **Каплин**, «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн управляющийĕ—49-мĕш суйлав округĕ.

Николай Алексеевич **Шманов**, КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ — 50-мĕш суйлав округĕ.

Николай Николаевич **Никитин**, КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ—51-мĕш суйлав округĕ.

Галина Николаевна **Филиппова**, пир-авăр техникумĕн директорĕн вĕренÿ енĕпе ĕçлекен заместителĕ — 52-мĕш суйлав округĕ.

Николай Алексеевич **Байков**, лента тĕртекен фабрика директорĕ — 53-мĕш суйлав округĕ.

Вера Ефимовна **Ефимова**, лента тĕртекен фабрикăри ткачиха—54-мĕш суйлав округĕ.

Варвара Александровна **Прокопьева**, «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕн штукатурсен бригадирĕ—55-мĕш суйлав округĕ.

Анатолий Иванович **Иванов**, ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ—56-мĕш суйлав округĕ.

Александр Иванович **Кассиров**, 1-мĕш участокри халăх судьи—57-мĕш суйлав округĕ.

Нина Егоровна **Карпова**, 6-мĕш вăтам шкулти учительница—58-мĕш суйлав округĕ.

Кирилл Андреевич **Андреев**, Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх министерствин пайĕн начальникĕ—59-мĕш суйлав округĕ.

Вера Ивановна **Козлова**, хĕрачасен 3-мĕш вăтам шкулĕн директорĕ—60-мĕш суйлав округĕ.

Валентина Сергеевна **Сергеева**, ĕççынни депутачĕсен хула Совет исполкомĕн председатель заместителĕ — 61-мĕш суйлав округĕ.

Тамара Михайловна **Таранова**, «Кожупряжь» промысла артелĕн бухгалтерĕ—62-мĕш суйлав округĕ.

Ольга Ивановна **Ырзем**, Чăваш академи театрĕн артистки—63-мĕш суйлав округĕ.

Антонина Трофимовна **Сорокина**, Шупашкарти çыхăну кантурĕн аслă агенчĕ—64-мĕш суйлав округĕ.

Вера Ивановна **Лебедева**, ĕççынни депутачĕсен хула Совет исполкомĕн сутуилÿ пайĕн заведующийĕ—65-мĕш суйлав округĕ.

Перасковья Емельяновна **Емельянова**, Шупашкарти промкомбинатри работница—66-мĕш суйлав округĕ.

Александра Ивановна **Андреева**, тумтир çĕлекен 2-мĕш мастерскойри çĕвĕçĕ—67-мĕш суйлав округĕ.

Леонид Хрисанфович **Михайлов**, КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ—68-мĕш суйлав округĕ.

Петр Иванович **Иванов**, 1-мĕш типографин линотипнăй цехĕнчи инструкторĕ—69-мĕш суйлав округĕ.

Алексей Васильевич **Морсков**, «Советская Чувашия» хаçатăн редактор заместителĕ—70-мĕш суйлав округĕ.

Павел Никитич **Денисов**, Госбанкăн хулари управленийĕн начальникĕ — 71-мĕш суйлав округĕ.

Екатерина Филипповна **Иванова**, 1-мĕш вăтам шкулăн вĕренÿ пайĕн заведующийĕ—72-мĕш суйлав округĕ.

Агафья Кузьминична **Кузьмина**, сăра завочĕн мастерĕ—73-мĕш суйлав округĕ.

Вера Семеновна **Тазова**, Шупашкарти макарон фабрикин главнăй инженерĕ—74-мĕш суйлав округĕ.

Георгий Наумович **Кулешов**, пир-авăр фабрикин директорĕ—75-мĕш суйлав округĕ.

Мария Алексеевна **Алексеева**, Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбиначĕн раскройщици—76-мĕш суйлав округĕ.

Вера Петровна **Краснова**, «Красный мебельщик» промысла артелĕнчи станочница—77-мĕш суйлав округĕ.

Прохор Трофимович **Трофимов**, Досаафăн республикăри оргкомитечĕн председателĕ—78-мĕш суйлав округĕ.

Нина Михайловна **Петрова**, Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи прядильщица—79-мĕш суйлав округĕ.

Александра Ивановна **Орешкина**, Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи ткачиха—80-мĕш суйлав округĕ.

Константин Евлампьевич **Евлампьев**, Чăваш педагогика институчĕн директорĕ—81-мĕш суйлав округĕ.

Зинаида Васильевна **Буркина**, Чăваш педагогика институчĕн ассистенчĕ—82-мĕш суйлав округĕ.

Василий Петрович **Сергеев**, Чăваш АССР Сывлăх министрĕн заместителĕ—83-мĕш суйлав округĕ.

Фекла Дмитриевна **Дмитриева**, Чăваш педагогика институчĕн аслă преподавателĕ—84-мĕш суйлав округĕ.

Антонина Васильевна **Черпакова**, арçын ачасен 4-мĕш вăтам шкулĕнчи учительница—85-мĕш суйлав округĕ.

Константин Никифорович **Халимонец**, Шупашкар хулинчи пушар хуралĕн начальникĕ—86-мĕш суйлав округĕ.

Николай Иванович **Чунаев**, Автотранспорт кантурĕн слесарь-моторисчĕ—87-мĕш суйлав округĕ.

Николай Григорьевич **Шувалов**, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод парткомĕн секретарĕ—88-мĕш суйлав округĕ.

Клавдия Александровна **Александрова**, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн цехри контролерĕ—89-мĕш суйлав округĕ.

Андрей Васильевич **Кузнецов**, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри газосварщик—90-мĕш суйлав округĕ.

Анна Артемьевна **Артемьева**, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн цехри мастерĕ—91-мĕш суйлав округĕ.

Николай Сергеевич **Татаркин**, Шупашкар хулин Çар комиссарĕ — 92-мĕш суйлав округĕ.

Тимофей Аркадьевич **Ахазов**, КПСС Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ—93-мĕш суйлав округĕ.

Валентина Митрофановна **Митрофанова**, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри монтажница—94-мĕш суйлав округĕ.

Николай Иванович **Кириллов**, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн цехри аслă мастерĕ—95-мĕш суйлав округĕ.

Борис Иванович **Хватов**, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн цехри аслă технологĕ—96-мĕш суйлав округĕ.

Мария Матвеевна **Усачева**, Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн бухгалтерĕ—97-мĕш суйлав округĕ.

Валентина Степановна **Барабанова**, 2-мĕш ача сачĕн заведующийĕ—98-мĕш суйлав округĕ.

Иван Данилович **Данилов**, «Росмясомолстрой» трестĕн строительствăпа монтаж управленийĕн каменщиксен бригадирĕ—99-мĕш суйлав округĕ.

Людмила Александровна **Солина**, чугун çулăн Шупашкарти станцийĕнчи тавар кантурĕн кассирĕ—100-мĕш суйлав округĕ.

Сергей Васильевич **Васильев**, Хусан чугун çулĕн 17-мĕш дистанцийĕн бригадирĕ—101-мĕш суйлав округĕ.

Павел Семенович **Семенов**, чугун çулăн Шупашкар станцийĕн начальникĕ—102-мĕш суйлав округĕ.

Евдокия Степановна **Степанова**, чугун çулăн Шупашкар станцийĕнчи стрелочница—103-мĕш суйлав округĕ.

Иван Федорович **Федоров**, каменщик — 104-мĕш суйлав округĕ.

Георгий Александрович **Ионов**, Шупашкар аэроклубĕн начальникĕ — 105-мĕш суйлав округĕ.

Михаил Данилович **Шумилов**, Чăваш совет писателĕсен союзĕн правлени председателĕ—106-мĕш суйлав округĕ.

Анна Дмитриевна **Буркова**, ача çуратмалли çурт врачĕ—107-мĕш суйлав округĕ.

Николай Алексеевич **Мамонтов**, Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх министрĕн заместителĕ—108-мĕш суйлав округĕ.

Филипп Миронович **Лукин**, Чăваш совет композиторĕсен союзĕн правлени председателĕ—109-мĕш суйлав округĕ.

Павел Викторович **Попов**, Шупашкарти электромеханически техникум преподавателĕ—110-мĕш суйлав округĕ.

Алексей Кузьмич **Кузьмин**, Шупашкарти столовăйсен трестĕн директорĕ — 111-мĕш суйлав округĕ.

Василий Яковлевич **Яковлев**, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕ—112-мĕш суйлав округĕ.

Зинаида Александровна **Давыдова**, кондитерски фабрика цехĕн бригадирĕ — 113-мĕш суйлав округĕ.

Наталия Матвеевна **Матвеева**, «Победа» промысла артель цехĕн мастерĕ — 114-мĕш суйлав округĕ.

Иван Осипович **Ефремов**, хулари апат-çимĕç комбиначĕн директорĕ—115-мĕш суйлав округĕ.

Ирина Семеновна **Тимошкина**, хулари апат-çимĕç комбиначĕн бригадирĕ — 116-мĕш суйлав округĕ.

Николай Федотович **Федотов**, «Чебторгин» артелĕн çĕвĕ çĕлекен цехĕн заведующийĕ—117-мĕш суйлав округĕ.

Иван Васильевич **Заикин**, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ—118-мĕш суйлав округĕ.

Алексей Васильевич **Протопопов**, Шупашкар хулин прокурорĕ — 119-мĕш суйлав округĕ.

Наталия Николаевна **Рыбакова**, килхуçи хĕрарăм—120-мĕш суйлав округĕ.

Николай Дмитриевич **Волков**, Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх министрĕ—121-мĕш суйлав округĕ.

Георгий Васильевич **Шапошников**, «Росглаввино» эрех комбинатĕнчи тимĕрçĕ—122-мĕш суйлав округĕ.

Аркадий Данилович **Данилов**, «Росглаввино» эрех комбинатĕнчи рабочи — 123-мĕш суйлав округĕ.

Василий Фадеевич **Тарасов**, Горкий-Хусан çул управленийĕн начальникĕ — 124-мĕш суйлав округĕ.

Филипп Павлович **Суслин**, «Чăвашстрой» трестĕнчи мозаичник—125-мĕш суйлав округĕ.

Афанасий Алексеевич **Алексеев**, хулари промкомбинат директорĕ—126-мĕш суйлав округĕ.

Георгий Васильевич **Николаев**, тарасасем юсакан заводри слесарь—127-мĕш суйлав округĕ.

Иван Ильич **Куприянов**, «Чăвашстрой» трест управляющийĕ—128-мĕш суйлав округĕ.

Сергей Николаевич **Дмитриев**, «Металлист» промысла артелĕн председателĕ—129-мĕш суйлав округĕ.

Нина Ильинична **Винокурова**, хула план комиссийĕн председателĕ—130-мĕш суйлав округĕ.

Андрей Ильич **Русаков**, Шупашкар хулинчи милици отделенийĕн начальникĕ—131-мĕш суйлав округĕ.

Нина Ефимовна **Удикова**, Кировски поселокри амбулатори врачĕ — 132-мĕш суйлав округĕ.

Зоя Васильевна **Шигаева**, пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хулари комитечĕн председателĕ — 133-мĕш суйлав округĕ.

Максим Алексеевич **Шарко**, Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин пайĕн начальникĕ—134-мĕш суйлав округĕ.

Рафаил Афанасьевич **Осанов**, Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕн заместителĕ—135-мĕш суйлав округĕ.

Иван Максимович **Васькин**, Чăваш АССР Çар комиссариатĕнчен—136-мĕш суйлав округĕ.

Вера Васильевна **Ковалева**, аш-какай тата сĕт-çу промышленность работникĕсен профсоюзĕн облгруппком председателĕ—137-мĕш суйлав округĕ.

Мария Семеновна **Миролюбова**, трахоматознăй институтăн научнăй сотрудникĕ—138-мĕш суйлав округĕ.

Юлия Кирилловна **Кириллова**, Чапаевски поселокран—139-мĕш суйлав округĕ.

Иван Алексеевич **Захарцев**,—140-мĕш суйлав округĕ.

Павел Дмитриевич **Дмитриев**, Чапаевски поселокран—141-мĕш суйлав округĕ.

Екатерина Тимофеевна **Тимофеева**, Чапаевски поселокран — 142-мĕш суйлав округĕ.

Александр Семенович **Туликов**, Чапаевски поселокран—143-мĕш суйлав округĕ.

Дмитрий Никитич **Полунаров**, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ—144-мĕш суйлав округĕ.

Сабира Назыровна **Хаирова**, Чапаевски поселокран—145-мĕш суйлав округĕ.

Семен Иванович **Иванов**, Чапаевски поселок Совечĕн председателĕ—146-мĕш суйлав округĕ.

Мария Федоровна **Мерентяева**, Чапаевски поселокран—147-мĕш суйлав округĕ.

Илларион Афанасьевич **Афанасьев**, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ—148-мĕш суйлав округĕ.

*(Юлашки 2-мĕш страницăра).*

# Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама тăратнă, округсенчи суйлав комиссийĕсем регистрациленĕ кандидатсен списокĕ

*(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).*

Зоя Ананьевна **Андреева**, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ—149-мĕш суйлав округĕ.

Вениамин Пантелеевич **Савенко**, Чапаевски поселокран—150-мĕш суйлав округĕ.

Михаил Павлович **Горбунов**, Чапаевски поселокран—151-мĕш суйлав округĕ.

Елизавета Алексеевна **Алексеева**, Чапаевски поселокран—152-мĕш суйлав округĕ.

Галина Ивановна **Иванова**, Чапаевски поселокран—153-мĕш суйлав округĕ.

Александра Полуэктовна **Котова**, Сосновка больницинчи главнăй врач — 154-мĕш суйлав округĕ.

Лидия Анатольевна **Самохвалова**, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕн пайĕн заведующийĕ — 155-мĕш суйлав округĕ.

Сергей Миронович **Миронов**, Сосновка поселок Совечĕн председателĕ—156-мĕш суйлав округĕ.

Нина Ивановна **Соломина**, вăрман промысла артелĕнчи работница—157-мĕш суйлав округĕ.

Надежда Владимировна **Степанова**, çичĕ çул вĕренмелли 10-мĕш шкулти учительница—158-мĕш суйлав округĕ.

Константин Павлович **Кошелев**, Сосновкăри йывăç завочĕн директорĕ — 159-мĕш суйлав округĕ.

Александр Иванович **Киндулин**, Сосновкăри хăма çуракан заводри слесарь—160-мĕш суйлав округĕ.

Александр Прокопьевич **Прокопьев**, Шупашкарти лесхимартель председателĕ—161-мĕш суйлав округĕ.

Петр Григорьевич **Гавриков**, Чăваш АССР Суту-илӳ министрĕн заместителĕ—162-мĕш суйлав округĕ.

Полина Ивановна **Попова**, Шупашкар вăрманпромхозĕн хăма çуракан заводĕнчи работница—163-мĕш суйлав округĕ.

Серафима Петровна **Иванова**, ĕççынни депутачĕсен хула Совет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ — 164-мĕш суйлав округĕ.

Петр Александрович **Зубов**, Атăл леш енчи электростанци директорĕ—165-мĕш суйлав округĕ.

Никита Петрович **Енчиков**, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕн председателĕ—166-мĕш суйлав округĕ.

Нина Андрияновна **Андриянова**, Атăл леш енчи электростанци работници — 167-мĕш суйлав округĕ.

Евгения Александровна **Нестерова**, Атăл леш енчи электростанцин аслă дежурнăйĕ—168-мĕш суйлав округĕ.

Алефтина Павловна **Бутыльченко**, 5-мĕш ача яслин заведующийĕ—169-мĕш суйлав округĕ.

Михаил Капитонович **Кожанов**, Шупашкарти 17-мĕш шкул заведующийĕ—170-мĕш суйлав округĕ.

Никандр Иванович **Грибов**, Атăл леш енчи торф предприятийĕн директорĕ — 171-мĕш суйлав округĕ.

Александр Павлович **Шевчиков**, КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ — 172-мĕш суйлав округĕ.

Петр Васильевич **Егоров**, Атăл леш енчи торф предприятийĕн производство пайĕн начальникĕ—173-мĕш суйлав округĕ.

Людмила Алексеевна **Алексеева**, Атăл леш енчи торф предприятийĕнчи бригадир—174-мĕш суйлав округĕ.

Александр Григорьевич **Старостин**, çичĕ çул вĕренмелли 13-мĕш шкулти учитель—175-мĕш суйлав округĕ.

Евгений Архипович **Никитин**, çăкăр пĕçерекен комбинат директорĕ—176-мĕш суйлав округĕ.

Николай Донатович **Хорьков**, хулари физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ—177-мĕш суйлав округĕ.

Григорий Трофимович **Трофимов**, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи кинофикаци управленийĕн начальникĕ—178-мĕш суйлав округĕ.

Вера Дмитриевна **Семенова**, хулари çутĕç пайĕн заведующийĕ — 179-мĕш суйлав округĕ.

Варвара Тимофеевна **Вастеева**, Сосновкăри вăрман заводĕнчи работница — 180-мĕш суйлав округĕ.

Виктор Николаевич **Гурьянов**, Приволжски вăрманпромхозĕн главнăй механикĕ—181-мĕш суйлав округĕ.

Николай Иванович **Игнатьев**, Чăваш АССР республикăри милици управленийĕн аслă инспекторĕ—182-мĕш суйлав округĕ.

Вера Даниловна **Емерова**, Приволжски вăрманпромхоз бригадирĕ — 183-мĕш суйлав округĕ.

Сергей Яковлевич **Гаврилов**, Чăваш АССР прокурорĕн заместителĕ—184-мĕш суйлав округĕ.

Фадей Степанович **Цветков**, ĕççынни депутачĕсен хула Совет исполкомĕн промышленность пайĕн заведующийĕ — 185-мĕш суйлав округĕ.

Петр Игнатьевич **Игнатьев**, Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность министрĕн заместителĕ—186-мĕш суйлав округĕ.

Маргарита Андреевна **Гаврилова**, Сосновкăри аптека пункчĕн заведующийĕ—185-мĕш суйлав округĕ.

Ефим Антонович **Антонов**, Приволжски вăрманпромхозри рабочи — 188-мĕш суйлав округĕ.

*Шупашкар хулинчи суйлав комиссийĕ.*

## Выранти Советсен суйлавĕ ячĕпе

Атăл леш енчи электростанци коллективĕ, 1952 çулхи производство планне ăнăçлăн тултарнă хыççăн, çĕнĕ çулта тата пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешет. Коллектив электроэнерги туса кăлармалли уйăхри плана январĕн 28-мĕшĕнче тултарчĕ. Кăçалхи январь уйăхĕнче, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, электроэнерги туса кăларасси 20 процент ытла ӳснĕ.

Халĕ электростанци коллективĕ выранти Советсен суйлав кунне хатĕрленсе февраль уйăхĕнчи плана суйлав кунĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет. Çавăн пекех коллектив продукцин хăйне лараканх хакне йӳнетес, топливо перекетлес, рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума палăртнă.

**П. ЗУБОВ,**
электростанци директорĕ.

## ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

# Лайăх ĕçлекен агитколлектив

Сăрьел—пысăк ял. Унта тутарсем пурăнаççĕ. Вĕсем хăйсен колхозĕпе мухтанаççĕ. Мухтанма та юрать: «Марс» колхоз—аван колхоз, вăл çулсерен аталанса, çирĕпленсе пырать. Колхозниксем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Колхозри пурнăç яланах вĕресе тăрать. Çак кунсенче Сăрьелĕнче пурнăç тата та хаваслăрах иртет. Колхозниксем февралĕн 22-мĕшне—суйлав кунне хатĕрленеççĕ, ăна çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме ĕмĕтленеççĕ.

Сăрьелĕнче парторганизацисем иккĕ: пĕри—7 çул вĕренмелли шкулта, тепри—«Марс» колхозра. Вĕсем яланах таччăн çыхăнса тата килĕштерсе ĕçлеççĕ. Çакă вара колхозниксем хушшинче агитациллĕ-пропагандăллă ĕçе лайăх организацилеме май панă.

Парторганизацисем 36 агитатор уйăрнă. Вĕсенчен коммунистсем 11 çын, ыттисем—партире тăман актив. Кашни агитатор хăйне çирĕплетсе панă килсенче тăтăшах пулать. Выранти Советсен суйлавне ирттересси çинчен Указ тухсан, агитаторсем хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсенчен кашниех суйлавçăсене пухса 5—6-шар калаçу ирттернĕ, суйлавçăсен килĕсенче те 3—4-шар хут пулнă. Агитаторсем И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă çĕнĕ произведенийĕ çинчен, аслă çулпуç съездра каланă историллĕ сăмах çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата суйлав законĕпе Сталинла Конституци çинчен ăнлантарса параççĕ.

Агитпункт массăллă-политикăллă ĕçсен центрĕ пулса тăнă. Агитпункт заведующийĕ пулса колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ Г. Димухаметов юлташ ĕçлет. Агитпункта тĕрлĕ плакатсемпе, лозунгсемпе илемлетнĕ. Унсăр пуçне кунта «Коммунизмшăн», «Коммунизм стройкисем», «Икĕ тĕнче—икĕ суйлав системи» ятлă витринăсем хатĕрленĕ, партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене пичетленĕ кĕнекесен витринине тунă.

Сĕтел çинче—тĕрлĕ журналсем, кĕнекесем, хаçатсем. Пурте вĕсем тăван чĕлхепе çырнăскерсем. Кунтах справкăсен сĕтелĕ. Унта выранти Советсене суйламалли положени, ССР Союзĕн Конституцийĕ, Чăваш АССР Конституцийĕ, заем вылявĕсене тĕрĕслемелли таблицисем пур.

Агитпунктран кăнтăрла та, каç та çын татăлмасть. Кунта пулма, агитаторсем каласа паракан хыпарсене е калаçусене итлесе ларма кăмăллă.

Çак çула кĕнĕренпе агитаторсем 60 хут ушкăнлă калаçусем ирттернĕ. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем 4 хут пулнă. Халăх пухăвĕсенче ялти лекторсен ушкăнĕнчи учительсем лекцисем е докладсем туса параççĕ. Кăçал 6 лекци пулнă. Лекцисен темисем çакăн пек: «Ялхуçалăхĕ çĕнĕ пилĕкçуллăхра», «Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тата коммунизм строительствин задачисем», «Совет гражданĕсен прависемпе обязанноçĕсем», «Совет суйлав системи—чи демократиллĕ система», «29 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе».

Клубра час-часах кино кăтартаççĕ. Январь уйăхĕнче колхозниксем икĕ картина курнă. Январĕн 19-мĕшĕнче «Великое зарево» ятлă кинокартина кăтартрĕç. Кино умĕн Г. Сунгатуллин юлташ Ленин пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ. Çак калаçу кинокартинăра мĕн кăтартнине лайăхрах ăнланма пулăшрĕ.

Агитаторсем колхозри стена хаçачĕпе боевой листоксем кăларас ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Стена хаçатне йĕркеллĕ кăлараççĕ. Боевой листоксене 8 номер кăларнă. Стена хаçачĕпе боевой листоксем колхозри çитменлĕхсене критиклеççĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшаççĕ.

Агитаторсем юлашки вăхăтра наглядлă агитацие те анлă сарчĕç. Урамсенче, хапхасем çинче, хăшпĕр килте парти чĕнĕвĕсене тата ытти лозунгсене ятарласа фанера хăмисем çине çырса çапнă.

Колхозниксем выранти Советсен суйлавне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхоз каснă йывăça çул хĕррине турттарса кăлармалли плана январĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ, вăрман касас тата турттарас плана февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах панă. Вăрманта халĕ 12 çын çуран, 6 лав ĕçлеççĕ. Вăрман турттарас ĕçре Мухаметзянов, Гениатуллин, Исхаков комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем кулленхи нормăна 125—130 процент тултараççĕ. Колхоз халĕ çуракине хатĕрленет. Ут хатĕрĕсене, машинăсене юсаса пĕтернĕ, вăрлăха çак кунсенчех тасатса пĕтереççĕ.

Январĕн 11-мĕшĕнче уя тислĕк кăларма воскресник ирттерчĕç. Çак кун çамрăксем уя 83 тонна тислĕк кăларчĕç, 24 центнер кĕл пухрĕç, 40 гектар çинче юр тытрĕç.

Политикăллă-массăллă ĕçе аван ертсе пынипе колхозра ĕç дисциплини çирĕпленет. Хуçалăхлă ĕçсем вăхăтра пулса пыраççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана, кайăк-кĕшĕксемсĕр пуçне, ытлашшипех тултарнă. Фермăра ĕçлекенсем выльăхсене юратса пăхаççĕ. Фермăсенче ăшă, çутă, таса. 1952 çулта фермăри кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.029 литр сĕт суса илнĕ. Доярка Хасьянова юлташ 7 ĕнерен 7 пăру илсе ӳстернĕ, кашни ĕне пуçне 1.552-шер литр сĕт суса илнĕ. Колхозниксем çитес çул выльăх-чĕрлĕх пахалăхне ӳстерессишĕн кĕрешеççĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци агитаторсем валли тăтăшах семинарсем е канашлусем ирттерет. Кăçал агитаторсене 5 хут пухса каласнă. Семинарсем аван иртеççĕ. Вĕсенче политикăллă докладсемсĕр пуçне пĕр-пĕрин опытне сӳтсе яваççĕ, агитаци ĕçне малалла аванлатма мероприятисем палăртаççĕ.

**А. АНТОНОВА.**
Елчĕк районĕ.

## Агитаторсен семинарĕ

ТĂВАЙ. КПСС райкомĕ ирттернĕ черетлĕ семинарта агитаторсем И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ çĕнĕ произведенийĕ çинчен лекци итлерĕç.

Выранти Советсен суйлавĕ тата агитаторсен задачисем çинчен КПСС райкомĕн секретарĕ Иванов юлташ доклад туса пачĕ.

ЧКАЛОВСКИ. Парти райкомĕ агитпункт заведующийĕсемпе довереннăйсен районти канашлăвне ирттерчĕ. Канашлура КПСС райкомĕн секретарĕ Фомин юлташ коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн агитацилес ĕç çинчен доклад туса пачĕ.

# СССР ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИНЧЕ

1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Совет Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Иран Правительстви хушшинче Каспий тинĕсĕн Кăнтăр çыранĕсенчи пулă промыслисене эксплуатацилесси çинчен килĕшӳ тунă пулнă. Çав Килĕшӳ тăрăх ун чухне Совет Союзĕпе Иран пĕрле «Иранрыба» ятлă компани тунă. Асăннă Килĕшӳре «Иранрыба» компанин 25 çул ĕçлемелле тесе срок палăртнă. Килĕшӳре çавăн пекех Компанин капиталĕнче Иран Правительствипе Совет Правительствин пĕр пек пайсем пулмаллине тата çав Компанин ĕçĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе пĕр тан правăсем пулмаллине палăртнă. Çапла ĕнтĕ, 1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчи Килĕшĕве икĕ енĕн те пĕр тан правăсем пулмаллине шута илсе тата Иранăн государство суверенитечĕпе Иран халăхĕн нациллĕ интересĕсене хисеплесе тунă.

«Иранрыба» компанин ĕçлемелли срокĕ 1953 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче тухнă май, Совет Правительстви Компанин ĕçне тепĕр сроклăха тăсма сĕнӳ панă.

Январĕн 29-мĕшĕнче Иран премьер-министрĕ Мосаддык господин ССР Союзĕн Иранри Посольствине çапла пĕлтернĕ: Килĕшӳре палăртнă срок иртнĕ май, Иран Правительстви Компани ĕçне чарса лартма решени йышăннă.

Çакăнпа пĕрлех Иран Правительстви хăй Совет Союзĕпе Иран хушшинче 1927 çулта тунă Килĕшĕвĕн 4-мĕш статьи тăрăх илнĕ хăйĕн обязательствисене пĕтĕмĕшпех пурнăçлама пулни çинчен пĕлтернĕ. Вăл статьяра çапла каланă: «Иранрыба» компанин ĕçне малалла тăсмасан, Иран Правительстви пулă промыслисене тепĕр 25 çул хушшинче виççĕмĕш государствăсене тата вĕсен çыннисене концессие памасть. Вăл çав промысласене Иран Правительствин тивĕçлĕ органĕсем урлă кăна эксплуатацилеме пулать, çав промысласене эксплуатацилеме Иран çыннисемсĕр пуçне урăх специалистсене чĕнмест.

Иран Правительстви «Иранрыба» компанин ĕçне чарса лартасси çинчен решени йышăннă май, ССР Союзĕн Иранри Посолĕ Садчиков юлташ Совет Правительстви хушнипе февралĕн 2-мĕшĕнче Иран премьер-министрне çакăн пек çыру панă:

«Господин Премьер-министр,

Совет Союзĕпе Иран пĕрле тунă «Иранрыба» компанин ĕçĕн срокĕ кăçал январĕн 31-мĕшĕнче тухнă май, Эсир Иран Правительстви çав Компанин ĕçне малалла тăсас мар тесе йышăнни çинчен пĕлтернĕ пирки мана çапла калама хушнă.

«Иранрыба» компани ĕçне малалла тăсасси çинчен сĕнӳ парса, Совет Правительстви çакна асра тытнă: «Иранрыба» ĕçĕ икĕ енĕшĕн те усăллă, вăл Иранпа Совет Союзĕ хушшинче экономика тĕлĕшĕнчен килĕштерсе ĕçлеме тата туслă çыхăнусем тытма пулăшать. «Иранрыба» компанине тӳрремĕнех хутшăнса, Иран Правительствипе Совет Правительстви капиталăн пĕр пек пайĕсене тытса тăраççĕ, çак Компанин ĕçне ертсе пырас тĕлĕшпе пĕр тан правăсемпе усă кураççĕ.

Иран Правительстви «Иранрыба» компани ĕçĕнчен чылай усă курнă. Вăл «Иранрыба» компанин усламĕсене, çавăн пекех Компани Иран Правительствине пулă промыслисене тара илнĕшĕн тӳлекен укçана тата налогсене илсе тăнă. Çапла вара Иран Правительстви «Иранрыба» компанин мĕнпур тупăшĕсенчен 64 процентне илсе тăнă. «Иранрыба» компани хăй ĕçленĕ вăхăтра Иранăн çурçĕрти районĕсенче экономикăллă пурнăçа аталанма лайăх пулăшнă тата çав районсенчи халăхран чылай пайне ĕçлесе пурăнмаллăх укçа тупма май панă.

«Иранрыба» компани ĕçĕн срокĕ тухнă май унăн ĕçне малалла тăсас мар тесе решени йышăнса, Иран Правительстви хăйĕн законлă правипе усă курнă. Çав правăна 1927 çулта «Иранрыба» çинчен тунă Килĕшӳре — икĕ енĕн те пĕр тан право пулмаллине кăтартса, Иранăн государство суверенитечĕпе Иран халăхĕн интересĕсене хисеплесе тунă Килĕшӳре кăтартса панă.

Иран Правительстви «Иранрыба» компани тĕлĕшпе йышăннă, сӳлерех асăннă решени çинчен пĕлтернине Совет Правительстви шута илет.

Совет Правительстви çакна палăртма кирлĕ тесе шутлать: Иран Правительстви çӳлте асăннă Килĕшĕвĕн 4-мĕш статьинче кăтартнă обязательствăсене пурнăçлани Иранпа Совет Союзĕ хушшинчи лайăх кӳршĕллĕ çыхăнусене малалла çирĕплетес ĕçре пысăк выран йышăнать. Паллă ĕнтĕ, çав статьяра çапла палăртнă: Компани концессине малалла тăсмасан, Перси Правительстви çав промысласене тепĕр 25 çул хушши виççĕмĕш государствăсене тата вĕсен çыннисене концессие памасть. Вăл çав промысласене Перси Правительствин тивĕçлĕ органĕсем урлă кăна эксплуатацилеме пулать, çав промысласене эксплуатацилеме Иран çыннисемсĕр пуçне урăх специалистсене чĕнмест.

Совет Союзĕпе Иран хушшинче 1927 çулта тунă Килĕшĕвĕн 4-мĕш статьи тăрăх хăй илнĕ обязательствăсене Иран Правительстви пĕтĕмĕшпех пурнăçлама пулни çинчен Эсир пĕлтернине Совет Правительстви çавăн пекех шута илет.

Иран Правительстви Совет Союзĕпе Иран пĕрле тунă «Иранрыба» компанин ĕçне чарса лартасси çинчен решени йышăннă май, «Иранрыба» компанине пĕтерес тĕлĕшпе тата Каспий тинĕсĕн кăнтăр çыранĕсенчи пулă промыслисене эксплуатацилесси çинчен 1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Иран хушшинче тунă Килĕшĕвĕн 4-мĕш статьинче каланă пек, унăн пурлăхне икĕ ен хушшинче пĕр тан пайламаллине шута илсе, халех Совет Союзĕпе Иранăн пĕрле Ликвидаци Комиссийĕ тумалли кирлĕ. Совет Правительстви ку ыйтупа ССР Союзĕн Иранри Посолне тивĕçлĕ кăтартусем панă. Иран хăй енчен пĕр тăхтаса тăмасăр асăннă Ликвидаци Комиссине хăйĕн представителĕсене уйăрасса Совет Правительстви кĕтет.

Господин Премьер-Министр, эпĕ Сире питех те хисеплесе тăни çинчен шантарса калани йышăнма ыйтатăп.

**И. САДЧИКОВ».**

## Çĕрулми тата купăста лартаççĕ

СТАЛИНАБАД, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Таджикистанри Сталинабад, Рохатин тата Дюшамбе районĕсенче çĕрулми тата ир пулакан купăста лартма тытăннă.

# Политехникăллă вĕренӳ çинчен

И. В. Сталин юлташ хăйĕн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕнче коммунизма куçма малтанлăха кирлĕ тĕп условисем çинчен программăллă положенисем кăларса тăратрĕ. Коммунизма куçмашкăн хатĕрленсе çитме, тесе вĕрентет Сталин юлташ, сахалтан та малтанлăха виçĕ тĕп условие пурнăçа кĕртни кирлĕ. Коммунизма куçма малтанлăха кирлĕ виççĕмĕш услови çинчен Сталин юлташ çапла каланă: «...общество культурине чи çӳлĕ шая çити ӳстерес пулать, вăл обществăн мĕнпур членĕсене вăй-халпа ăс-тăн тĕлĕшĕнчи пултарулăхĕсене пур енĕпе те аталантарма май патăр, общество членĕсем общество аталанăвĕн активлă деятелĕсем пулма çителĕклĕ таран вĕренме пултарччăр, вĕсем ирĕклĕ професси суйласа илме пултарччăр, çапла вара вĕсен, ĕç пайланса тăнă май, ĕмĕр тăршшĕпех пĕр профессипе çыхăнса тăмалла ан пултăр».

Çак кăтартăва асра тытса ĕнтĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ: вăтам шкулта политехникăллă вĕренĕве пурнăçлама тытăнмалла тата пур çĕрте те политехникăллă вĕренĕве куçма кирлĕ мероприятисем туса ирттермелле, тесе йышăнчĕ. Çакна ăна пур енĕпе те пĕлӳ паракан шкулăн коммунистла воспитани парас ĕçне малалла хăйăхлатас тата вăтам шкултан вĕренсе тухакансене професси суйласа илме условисем туса парас тĕллевпе тунă.

Политехникăллă вĕренӳ çынсене воспитани парас ĕçре пысăк выран йышăнса тăрать. Политехникăллă вĕренӳ принципĕсене Маркспа Энгельс та кăтартса панă. Çав принципсем марксистла наука теорийĕнче паллă выран йышăнса тăраççĕ Политехникăллă вĕренӳ общество членĕсене пур енĕпе те аталантарма чи кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать. Общество интересĕсемшĕн план тăрăх аталанса пыракан промышленноçа, темĕ Энгельс, пур енĕпе те пултарулла, производствăн пĕтĕм системине тавçăрса илме пĕлекен çынсем кирлĕ. Энгельс малалла çапла кăтартса панă: социализм чухне çамрăксене пур енĕпе те воспитани парса пырĕç, çакă вăл çамрăксене, общество пушшисене е хăйсен харпăр хăй пултарулăхне кура, производствăн пĕр отраслĕнчен тепĕр отраслĕне куçма май парĕ. «Çапла вара, коммунизм тăвас тĕллевпе пурăнакан общество хăйĕн членĕсен пултарулăхне пур енчен те аталантарма тата çав пултарулăха туллин кăтартма май туса парĕ», тесе çырнă Энгельс.

Пирĕн çĕршывра чи çӳлте тăракан техника никĕсĕ çинче производство тăтăшах малалла аталанса тата вăйланса пырать. Социализмлă обществăра техника малалла вăйланса пынипе пĕр вăхăтрах халăхăн культурăллă шайĕ те тăтăшах ӳсет. Вăй-хал ĕçĕне ăс-тăн ĕçĕ хушшинчи палăрах хире-хирĕçлĕхсене пĕтерме пирĕн çĕршывра лайăх условисем пулса тăраççĕ.

Чи çӳлте тăракан техникăпа ĕçлеме пысăк пĕлӳллĕ рабочисем кирлĕ. Шкулсенче политехникăллă вĕренĕве йĕркелени çак пысăк задачăна татса пама кирлĕ условисенчен пĕри пулать те ĕнтĕ.

Политехникăллă вĕренӳ мĕне пĕлтернине В. И. Ленин тĕплĕн кăтартса панă. Политехникăллă пуçламăш пĕлӳсен шутне, В. И. Ленин кăтартса панă тăрăх, çаксем кĕреççĕ: электричество çинчен тĕплĕ пĕлни, промышленноçра электричествăпа мĕнле усă курмалли çинчен тата çĕршыва электрификацилемелли плана пĕлни, электростанцисене, заводсене, совхозсене кайса çӳрени, астрономи никĕсĕсене пĕлни.

В. И. Ленин коммунизмлă общество тăвас ĕçре наука пысăк выран йышăнса тăнине кăтартса панă. Социализмлă промышленноçпа ялхуçалăхне, ку чухнехи наукăпа техника çитĕнĕвĕсемпе усă курсан кăна малалла аталантарма пулать. Электрификаци пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртса, комсомолăн III-мĕш съездĕнче В. И. Ленин çапла каланă: «Электрификаци ĕçне хут пĕлмен çынсем юраманнине эсир лайăх ăнланатăр ĕнтĕ, кунта хут пĕлни те çителĕклĕ мар ха. Кунта электричество мĕн иккенне ăнланни те çителĕклĕ мар-ха, техника тĕлĕшĕнчен унпа промышленноçра та, çĕр ĕçĕнче те, промышленноçпа çĕр ĕçĕн уйрăм отраслĕсенче те мĕнле усă курмаллине пĕлес пулать. Çакна тума хамăрăн вĕренес пулать, çакна тума ĕçлекенсен ӳсее çитĕнекен пĕтĕм ăруне вĕрентес пулать».

В. И. Ленин 1920—1921 çулсенчех, империализмлă вăрçăпа ют çĕршывсен интервенцине пула çĕршыв экономики çав тери юхăннă пулин те, вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсен политехникăллă тавракурăм пулмалла, вĕсем политехникăллă вĕрентĕвĕн никĕсĕсене пĕлмелле, çав вĕрентĕвĕн содержанийĕ вăл—наука пĕлĕвĕсем тата промышленноçпа ялхуçалăхне электрификацилес ĕçĕн практикăллă условийĕсем пулмалла, тесе кăтартса панă.

Политехнизм вăл—ыттисенчен уйрăм тăракан предмет мар. Çамрăк ăрăва хальхи вăхăтри производствăн пĕтĕмĕшле никĕсĕсемпе паллаштарас ĕçе, пуринчен ытла, наукăсен никĕсне вĕрентнипе туса пымалла. Çакна тума, чи малтанах, чĕтĕмĕшле пĕлӳ чылай пысăк пулмалла: математика, физика, хими, биологи пĕлмелле, çутçанталăк законĕсене лайăх ăнланмалла.

Политехникăллă вĕренӳн икĕ задачăна: теори тĕлĕшĕнчен—çамрăк ăрăва наукăсен никĕсĕсемпе, урăхла каласан, хальхи вăхăтри индустри никĕсĕсемпе паллаштарас тата практика тĕлĕшĕнчен — ĕç хатĕрĕсемпе усă курма хăнăхтарас задачăна татса пама май памалла.

Пĕтĕмĕшле вĕренĕве практикăри хăнăхусемпе, пĕлӳсемпе çыхăнтарса пырасси коммунизмлă обществăра çав тери кирлĕ пулса тăрать. Коммунизм вăхăтĕнчи çынсем политехникăллă тавракурăмĕ тата наукăллă ăнланăвĕ питĕ пысăк пулмалла.

Партин XVIII-мĕш съездĕнче Молотов юлташ: шкулсенче наукăсен никĕсĕсем çинчен ăнлантарса панипе кăна лăпланса лармалла мар, хăшпĕр практикăллă хăнăхусене те памалла, тесе кăтартса панă.

Шкулти ĕçĕн пĕрремĕш тата тĕп форми вăл—класра, вĕренӳ кабинетĕнче, лабораторинче, шкулăн çĕр участокĕнче, чĕрчунсен кĕтесĕнче класри пĕтĕм вĕренекенсемпе занятисем ирттерни.

Политехникăллă вĕренĕве пурнăçлас ĕçре ачасене электростанцисене, заводсене, колхозсене экскурсие илсе çӳрени пысăк выран йышăнать. Çакăн пек экскурсисене каймалли вырансем ялта та сахал мар. Халĕ колхозсенче тĕрлĕрен машинăсем, гидроэлектростанцисем, двигательсем т. ыт. те пур. Акă, Элĕк районĕнчи Вутланти çичĕ çул вĕренмелли шкулта пиллĕкмĕш класра вĕренекен ачасем «Вăрлăха акма хатĕрлесси» темăна вĕреннĕ хыççăн вăрлăх тасатакан машинăсемпе паллашнă. Экскурсинче пулнă ачасем машинăсемпе ĕçлени тухăçлăрах, усăллăрах пулнине лайăх ăнланса илнĕ.

Улттăмĕш класра вĕренекен ачасене районти апат-çимĕç комбинатне экскурсие илсе кайнă. Ачасем цехсенче пулса производствăпа паллашнă.

Нумай шкулсенче вĕренекенсем Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче, Засурскри лашасем ĕрчетекен совхозра экскурсисенче пулаççĕ. Производствăра, цехра, совхозра, колхозра, МТС-ра экскурсире пулса ачасем тата учительсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшакан çĕнĕ паха меслетсемпе тата производство новаторĕсен опычĕпе паллашаççĕ.

Хальхи вăхăтри техникăпа производствăн çитĕнĕвĕсемпе паллаштарма кинопа та анлăн усă курма пулать. Юлашки çулсенче вĕренӳре кинокартинăсемпе усă курасси хулари шкулсенче чылай аванланчĕ. Шупашкарти шкулсенче 1950—51-мĕш вĕренӳ çулĕнче киноурoксем 100 ирттернĕ пулсан, 1951—1952 вĕренӳ çулĕнче 283 урок ирттернĕ.

11-мĕш номерлĕ вăтам шкулта (Шупашкар хули) вĕренӳпе воспитани енĕпе кăларнă фильмсене тăтăшах кăтартаççĕ. Фильмсене кăтартма шкулăн сасăллă кинопередвижка пур. Программа материалĕсене вĕреннĕ май, ачасене, сăмахран, «Зеленные водоросли», «Работа И. В. Мичурина», «Условные рефлексы», «Кровообращение» т. ыт. фильмсем кăтартнă. Çавăн пекех «Сила жизни», «Человек и обезьяна», «Памятники древнего Египта» «Тургеневские места» тата И. П. Павлов, Ч. Дарвин, Т. Д. Лысенко çинчен калакан фильмсене кăтартма палăртнă.

Шкулсенче производствăпа çыхăннă задачăсене шутлас ĕçе анлăн туса пымалла. Вăл задачăсене физика, хими тата математика урокĕсенче пама пулать.

Черченипе ӳкерчĕксем тăвас ĕçе те вăйлатмалла. Вăтам шкулсенче черчени урокĕсене ирттерме ятарласа уйрăм пӳлĕмсем тума юрать.

Ачасен пултарулăхне сарса пыма тăрăшмалла, шкулти вĕренӳре воспитани ĕçне пăхăнса, тăтăшах практикăллă занятисем ирттермелле, ачасене обществăллă усăллă ĕçе хутшăнтармалла.

Техникăна вĕренмелли кружоксем организацилени уйрăммăнах пысăк выран йышăнать.

Радио юратакан çамрăксем чылайăшĕ, хăйсен шкулĕсенчи учительсем ертсе пынипе, колхозниксен çурчĕсене радио кĕртес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Çапла, сăмахран, Вăрнарти вăтам шкулта вĕренекенсем заводра радиоузел тунă. Сĕнтĕр районĕнчи вăтам шкулта радио юратакансен кружокĕн членĕсем детекторлă приемниксем пурĕ 400 тунă, вĕсене колхозниксен пӳрчĕсене лартса панă.

Юлашки çулсенче биологи кружокĕсем нумайрах организацилеме тытăнчĕç. Биологи ыйтăвĕсем тăрăх массăллă мероприятисем, пионер сборĕсем нумай ирттереççĕ. И. В. Мичурин, К. А. Тимирязев, Т. Д. Лысенко пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каçсем ирттереççĕ, унта хăшпĕр чухне вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене те чĕнеççĕ. Чылай шкулсенче класра вĕреннине практикăллă ĕçсемпе çыхăнтарса пыраççĕ.

Комсомольски районĕнчи Кĕçĕн Сĕрпӳелти çичĕ çул вĕренмелли шкулти пионерсемпе вĕренекенсем, çутçанталăк предмечĕ вĕрентекен преподаватель В. Смирнов ертсе пынипе, хăйсен сăнав участокĕнче темиçе çул ĕнтĕ натуралистла тĕрлĕрен ĕçсем туса пыраççĕ. Сăнав участокĕнче ĕçлесе, вĕренекенсем теорие вĕреннине практикăра тĕрĕслеççĕ, программа материалне тарăнрах ăнланаççĕ, тĕрлĕрен ӳсентăрансене пăхса ӳстерме, инвентарьпе усă курма хăнăхаççĕ. Шкул çумĕнчи çĕр участокĕнче мĕнпур ĕçе вĕренекенсем хăйсем туса пыраççĕ. Ачасем ялхуçалăхĕнче кашни çынна кирлĕ пĕлӳсемпе практикăллă хăнăхусем туянаççĕ. Шкулăн çĕр участокĕнче колхоз акса туман тĕштырăсемпе пахча çимĕçĕсене те, сăмахран, çара пĕрчĕллĕ сĕлĕ, хăлчăксăр урпа, туратлă тулă, судан курăкĕ, помидорсен, купăстасен, фасольсен уйрăм сорчĕсене т. ыт. те ӳстереççĕ. Çĕрулми калчине лартса опыт тăваççĕ. Колхозра пурçăн хуртне ĕрчетес тĕлĕшпе паха ĕçсем туни çинчен те каламасăр иртме çук.

Ку шкулти юннатсен кружокĕ 1939 çултанпа ĕçлет. Унта пурĕ пилĕк секци. Секцисем эрнере пĕр хутчен пухăнаççĕ. Шкулăн çырла-çимĕç пахчи, питомник, тĕштырăсем тата пахча çимĕçсем ӳстермелли сăнав участокĕсем, чечек ӳстермелли йăрансем, парник пур.

Çапла ĕнтĕ, политехникăллă вĕренӳ ачасене производствăн тĕп никĕсĕсемпе паллаштарать, вĕренĕве производство ĕçĕпе çыхăнтарни практикăллă нумай хăнăхусем туянма май парать. Шкул валли оборудовани туса, шкул çумĕнчи опытлă участоксенче ĕçлесе, ялхуçалăх культурисем ӳстерсе, вĕренекенсем обществăллă производствăна хутшăнаççĕ. Обществăллă производствăна хутшăнтарни ачасене коммунизмлă воспитани пама чылай пулăшать, ĕçре пĕр-пĕрине пулăшма, ĕçе юратма вĕрентет Çакă вăл ачасене вĕренӳ ĕçне те ăнланулла тата творчествăллă хаклама хăнăхтармалла.

**Н. СТЕПАНОВ,**
педагогика наукисен кандидачĕ.

# Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен 1952 çулхи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

## СЫСНА ПĂХАКАНСЕМ

| Пышăнакан вырăн | Хушамачĕ | Колхоз, район ячĕсем | Кашни ама сыснаран вăтам шутпа çура илнĕ |
|---|---|---|---|
| 1. | Р Н Шурбина | Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхоз | 24 |
| 2. | Ф. Зайцева | Комсомольски районĕнчи «Нива» колхоз | 24 |
| 3. | З Кутузова | Комсомольски районĕнчи «Нива» колхоз | 24 |
| 4. | Е И Мигушева | Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз | 23,5 |
| 5. | М. Я Кудрова | Çĕмĕрле районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз | 22,2 |
| 6. | Е Айдарова | Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз | 22 |
| 7. | Ф. В Николаева | Чкаловски районĕнчи «Восток» колхоз | 21,3 |
| 8. | М. Е Емельянова | Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 21 |
| 9. | А. А. Степанова | Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз | 20,6 |
| 10. | А. А. Алексеева | Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 20 |
| 11. | В. А. Плотникова | Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз | 19,8 |
| 12. | М. Н. Никифорова | Шăхасан районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз | 19,6 |
| 13. | З. Н Николаева | Шăхасан районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз | 19,3 |
| 14. | В. М. Лаптев | Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз | 19,3 |
| 15. | Т. К Тихонова | Шăмăршă районĕнчи «Искра» колхоз | 19,1 |
| 16. | А М Деманова | Кувакино районĕнчи «Победа» колхоз | 19 |
| 17. | Н Кудрявцева | Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 18,7 |
| 18. | А. Г. Тимофеев | Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз | 18,6 |
| 19. | В. М. Сторожев | Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз | 18,4 |
| 20. | А. И. Иванова | Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 18.0 |
| 21. | О Н Николаева | Чкаловски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз | 18,0 |
| 22. | А. С. Серафимова | Шăхасан районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз | 18.0 |
| 23. | Л. Л. Сорокина | Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз | 17,7 |
| 24. | С. А Угарина | Шăмăршă районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз | 17,7 |
| 25. | Т Я Краснова | Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхоз | 17,6 |
| 26. | К. Н. Головинская | Чкаловски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз | 17,6 |
| 27. | Е. Г. Гаврилова | Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз | 17,3 |
| 28. | К. А. Азмуханова | Чкаловски районĕнчи «Правда» колхоз | 17,3 |
| 29. | Р. С Мясникова | Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз | 17,3 |
| 30. | М. Н. Потапова | Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз | 17,0 |
| 31. | О. Качалкина | Кувакино районĕнчи «Красный Партизан» колхоз | 17,0 |
| 32. | В. В Бочкарев | Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз | 16,9 |
| 33. | Н. И. Соколова | Куславкка районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз | 16.6 |
| 34. | Н. И. Выкова | Шăмăршă районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз | 16,5 |
| 35. | А. Астраханцева | Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз | 16,4 |
| 36. | М. И. Хиноверов | Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз | 16.4 |
| 37. | В. Д. Данилова | Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз | 16,3 |
| 38. | Н. А. Григорьева | Комсомольски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз | 16,3 |
| 39. | Л Зайкова | Комсомольски районĕнчи «Гигант» колхоз | 16,3 |
| 40. | С. А. Царева | Чкаловски районĕнчи «Восток» колхоз | 16,3 |
| 41. | И С Зайцева | Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз | 16,1 |
| 42. | К М Михайлова | Йĕпреç районĕнчи «Правда» колхоз | 16,0 |
| 43. | А В Кузьмина | Елчĕк районĕнчи «Пахарь» колхоз | 16,0 |
| 44. | Т. А. Куршина | Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз | 16,0 |
| 45. | М. И. Автономова | Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 15,8 |
| 46. | Г. И. Ибрагимова | Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз | 15,6 |
| 47. | А. А. Поздеева | Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 15,6 |
| 48. | В. А. Царева | Чкаловски районĕнчи «Восток» колхоз | 15,5 |
| 49. | А А. Таксина | Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз | 15,5 |
| 50. | Н. С. Семенова | Куславкка районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз | 15,4 |
| 51. | А. Е. Ефимова | Чкаловски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз | 15,4 |
| 52. | А. Ф. Кудряшова | Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз | 15,3 |
| 53. | К. С. Серафимова | Йĕпреç районĕнчи «Путиловка» колхоз | 15,3 |
| 54. | А. Г. Ильина | Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз | 15,3 |
| 55. | А. Архилина | Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз | 15,2 |
| 56. | В. А. Алексеев | Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз | 15,1 |
| 57. | А. Перепелкина | Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз | 15,1 |
| 58. | М А Птичнова | Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз | 15,0 |
| 59. | А. Д. Смирнова | Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз | 15,0 |
| 60. | З. Ф. Федорова | Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз | 15,0 |
| 61. | М. Смирнова | Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхог | 15,0 |
| 62. | Р. Александрова | Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхоз | 15,0 |
| 63. | Л Мешкова | Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз | 15.0 |
| 64. | Е. П. Петрова | Красноармейски районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхоз | 15,0 |

## СУРĂХ ПĂХАКАНСЕМ

| Пышăнакан вырăн | Хушамачĕ | Колхоз, район ячĕсем | Вăтам шутпа кашни сурăхран çăм касса илнĕ (килогрампа) |
|---|---|---|---|
| 1. | Н. М. Крынецкий | Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз | 4,65 кг. |
| 2. | В. С. Семенов | Канаш районĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз | 4,2 » |
| 3. | М. А. Портнова | Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 4,0 » |
| 4. | М. А Поздеева | Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз | 3,32 » |
| 5. | М. П Платонов | Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз | 3,1 » |
| 6. | Е. И. Шильянова | Шупашкар районĕнчи Фрунзе ячĕпе тăракан колхоз | 3,0 » |

## КАЙĂК-КЕШĔК ПĂХАКАНСЕМ

| Пышăнакан вырăн | Хушамачĕ | Колхоз, район ячĕсем | Çăмарта тăвакан кашни чăхран вăтам шутпа çакăн чухлĕ çăмарта илнĕ. |
|---|---|---|---|
| 1. | М. А. Грибова | Калинино районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз | 86 шт. |
| 2. | В П Григорьева | Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз | 83 » |
| 3. | В. А. Александрова | Красноармейски районĕнчи «Красное Сормово» колхоз | 81 » |
| 4. | А. Т. Козлова | Ишлей районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз | 78 » |

## Ĕçри хастарлăх

ЕЛЧĔК. «Новая жизнь» колхоз хĕрсех суракине хатĕрленет. Паянхи куна 300 центнер ытла вăрлăх сортласа, тасатса хунă, вăрлăх пахалăхне районти лабораторире тĕрĕслеттернĕ. Колхоз кăçал 215 гектар çинче юр тытса хăварать. Паянхи куна уй-хире пин лав ытла тислĕк кăларнă.

Колхоз тимĕрçисем Н. Кузнецовпа Д. Александров юлташсем 11 плуг, 2 сеялка, 13 сӳре юсаса хатĕрленĕ. Халĕ вĕсем урапа-çуна тавраш̆есене тӳрлетеççĕ.

Колхоз правленийĕ вăрман хатĕрлемелли плана тултарма колхозниксене мобилизацилерĕ. Колхозниксем вăрман хатĕрлевĕнче тимлĕ ĕçлеççĕ.

Артель хуçалăхне малалла татах та вăйлатса, тĕреклетсе пырас шутпа «Новая жизнь» колхоз членĕсем кăçал кӳршĕри «Родина» колхозри колхозниксемпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. ФЕДОРОВ.

Шупашкарти пир-авăр фабрикин коллективĕ январьти производство планне срокчен тултарчĕ, планран иртттерсе катам пир чылай тĕртсе кăларчĕ. Фабрика коллективĕ, вырăнти Советсен суйлавĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пысăк хастарлăхпа ĕçлет.

Укерчĕк çинче: фабрикăри чи лайăх работницăсенчен пĕрь Е. М. Бранькова юлташ ĕçре

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

## Пысăк çитĕнӳ

ЭЛЕК. Шверник ячĕпе тăракан колхоз ферминче план тăрăх 336 сысна пулмалла пулсан, паянхи куна фермăра 357 пуç сысна шутланать.

Сыснасем пăхнă çĕрте Евдокия Смирнова колхозница уйрăмах тăрăшса ĕçлет. Фермăра 12 çул ĕçлесе, вăл пысăк опыт пухнă. Вăл сыснасене вăхăтра тата зоотехника кăтартнă пек норма тăрăх тăрантарать. Кашни сыснана куллен 6 килограмм çĕрулми, 1,5 килограмм тĕштырă тата çăнăх параççĕ. Смирнова свинарка çĕрулмипе тĕштырăсене яланах пĕçерсе парать. Вăл пĕчĕк çурасене уйрăмах лайăх пăхать, икĕ уйăхран вĕсене амăшĕсенчен уйăрать. Çак вăхăтра вĕсем вăтам шутпа 24-шар килограмм таяççĕ. Смирнова юлташ иртнĕ çулта хăйне çирĕплетсе панă кашни сысна аминчен вăтам шутпа 18 çура илсе ӳстернĕ.

Колхоз правленийĕ Евдокия Смирновăна кашни çулах ĕçшĕн хушса тӳлет. Иртнĕ çулхи ĕçшĕн ăна 8 сысна çури хушса параççĕ.

Колхозри сысна фермин заведующийĕ В. Михайлов юлташ фермăри ĕçсене тĕрĕс йĕркелесе пырать. Фермăсенчи работниксем пурте выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерессишĕн, вĕсен тухăçлăхне ытларах хăпартассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

А. ЕФИМОВ.

## Кормозапарниксем туса кăларнă

Шупашкарти «Леспром» артель коллективĕ кăçалхи январь уйăхĕнчи производство планне 4 кун малтан пурнăçланă. Артель членĕсем республика правительствин ответлă заданине ăнăçлă тултарнă—январь уйăхĕнче колхозсем валли 150 кормозапарник туса кăларнă.

## Çĕнĕ павильонсем

КАНАШ. Çак кунсенче «Дружба» тата «Красный воин» артельсем хулари ĕççыннисем валли куллен кирлĕ япаласем çĕнĕрен тума тата юсама пĕрер павильон уçрĕç. Павильонсенче атă-пушмак, тумтир çĕлемелли, машинкăсем, çĕвĕ машинисем, сехетсем тата счетчиксем юсамалли цехсем ĕçлеççĕ.

Г. ИСАЕВ.

*„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн*

## Çитменлĕхсене пĕтерсе пыратпăр

Нумаях пулмасть «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Массăран уйрăлса кайсан» ятлă статья пичетленсе тухрĕ. Унта пирĕн машина-трактор станцинчи партбюропа унăн секретарĕн çитменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса панă.

Çав статьяна парторганизаци пухăвĕнче сӳтсе яврăмăр. Ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме пуху татăклă решенисем йышăнчĕ, Ку статьяра эпир парти пухăвĕ йышăннă решенисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен кĕскен каласа парасшăн.

Пĕр уйăх каярах эпир Шупашкар МТС-ĕнче ĕçлекенсенчен çыру илтĕмĕр. Унта вĕсем хăйсен обязательствисем çинчен каласа пачĕç, пире социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

Вĕсен чĕнĕвне пирĕн МТС-ри трактористсем, бригадирсем, механиксем, комбайнерсем хапăл туса йышăнчĕç.

Тăваттăмĕш кварталта эпир начар ĕçлерĕмĕр. Тракторсене юсамалли плана тултараймарăмăр. Пуçламăш парторганизаципе МТС дирекцийĕ юсав ĕçĕсене ăнăçлă туса пыма малтанах хатĕрленсе çитеймен пулнă. Пĕртен-пĕр двигатель, ăна темиçе хут тĕпрен юсанă пулин те, ĕçлеймерĕ. Пире иртнĕ çуркуннех çĕнĕ стационарнăй дизельнăй двигатель панăччĕ. Ăна вырнаçтарса лартма сурт тумаллаччĕ. Анчах Ялхуçалăх министерстви укçа памарĕ, çавăн пирки çак паха двигатель халĕ те усăсăр ларать. Çапла вара эпир нимĕнле станока та ĕçлеттерме пултараймарăмăр. Трактористсем те, станоксем ĕçлемен пирки, ĕçе йĕркеллĕ çӳремерĕç. Тăваттăмĕш кварталта 19 трактор вырăнне, 13 трактор çеç юсарăмăр. Вĕсенчен те чылайăшĕ çăмăл ремонт тумаллискерсем çеç пулнă. Çак пысăк çитменлĕх январь уйăхĕнче те чăсăлса пычĕ.

Пуçламăш парторганизаци пуçарнипе Шупашкартан Ишлее паракан электроэнергине усă курма тытăнтăмăр. Халĕ ку ĕçе йĕркелесе янă ĕнтĕ. Станоксем пурте электромоторсемпе ĕçлеççĕ.

Отчетпа суйлав пухăвĕнче партбюрона, унăн секретарьне, дирекцие машинăсене юсас ĕçе япăх организациленишĕн хытă критиклерĕç. Пуху пулсан тепĕр кунхех КПСС Ишлей райкомĕ те çак ыйтăва бюро ларăвĕнче сӳтсе яврĕ. Пирĕн нумай çитменлĕхсем ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешмен пирки пулнă.

Шупашкар МТС коллективĕ чĕннине, кайран Пăрачкав МТС коллективĕ чĕннине сӳтсе явса обязательство илнĕ хыççăн, трактористсем хăйсене панă заданисене вăхăтра тата срокран маларах пурнăçлама пуçларĕç. Тракторсем мастерскойран дирекци туса панă график тăрăх тухма пуçларĕç. Январĕн 23-мĕшĕнче пĕр СХТЗ трактор срокран пĕр кун малтан тухрĕ, тепĕр тракторĕ—ДТ-54,—январĕн 31-мĕшĕнче мастерскойран тухмалласкер, 7 кун маларах тухрĕ.

Тăваттăмĕш кварталта 13 трактор юсанă пулсан, январьти çирĕм кун хушшинче 9 трактор мастерскойран юсанса тухать. Çак хăвăртлăх малалла та чакмасăр пырсан, МТС коллективĕ юлашки тракторсене мартăн 20-мĕшĕнче юсаса пĕтерме пултарать. Çавăнпа пирĕн коллектив тракторсене çак срокра юсаса пĕтерме обязательство илчĕ. Ытти машинăсене те çав срокрах юсаса пĕтеретпĕр.

Узловой меслетпе ĕçлесси çинчен сӳтсе явнă хыççăн, механиксем кашни кунах ĕç итогне пăхса тухса, малаллахи ĕçсене тата лайăхрах, хăвăртрах тăвас тесе çĕнĕ плансем йышăнаççĕ, кашни рабочие уйрăм заданисем параççĕ.

Партбюро членĕсем эрнере 3—4 хут политинформаци иртттереççĕ. Стена хаçачĕ уйăхра иккĕ тухса тăрать, боевой листоксем 3—4 кунта пĕрре тухаççĕ. Механизаторсем валли докладсем, лекцисем иртттеретпĕр, хаçат-журналсем, кĕнекесем çителĕклĕ.

Палăртас пулать: тракторсене юсас ĕçре коммунистсем лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ. Тракторсен двигателĕсене юсас ĕçе бригадир С. Иванов юлташ ертсе пырать. Унта Т. Ефимов, Ф. Ермаков, С. Васильев юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Тракторсене пустарас ĕçе бригадир П. Матросов юлташ ертсе пырать. Малтанхи вăхăтра бригадир П. Васильев юлташ ĕçе йĕркеллĕ çӳремесчĕ. Халĕ вăл тĕпренех улшăнчĕ. П. Васильев юлташ ертсе пынипе 43-мĕш номерлĕ ДТ-54 трактора срокпа палăртнинчен 7 кун малтан юсаса пĕтерчĕ. Çавăн пекех радиаторсем юсанă çĕрте трактористка Ф. Кигашова лайăх тĕслĕх кăтартать. Вăл радиаторсене вăхăтра юсаса çитерет. Шатунно-поршневой группăра МТС-ра мала тухнă, республикăри механизаторсен канашлăвĕнче пулнă Н. Елахов юлташ ĕçлет. Электросварщица М. Степанова юлташ панă заданисене яланах кирлĕ срокра туса парать.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те нумай-ха. Уйрăм трактористсем ĕçе йĕркеллĕ çӳремеççĕ, панă заданисене вăхăтра пурнăçламаççĕ. Механиксемпе бригадирсем узловой меслетпе ĕçлеме тĕплĕн вĕренсе çитеймен. Главнăй механик Г. Сударев юлташ хăй те узловой меслетпе ĕçлессишĕн хытах çунмасть, малалла пулма пултаракан çитменлĕхсене чухламасть. Çавăнпа тепĕр чухне хаклă мар, çăмăллăн тупма май пур пайсем çук пирки пĕр тракторсем мастерскойран тухаймасăр тăраççĕ. Кирлĕ япаласене вăхăтра тăратмасть. Çав вăхăтрах оборудованипе те çителĕклĕ усă кураççĕ теме çук. Инструментсене тирпейсĕр тытса çĕмĕрнисем те пулаççĕ. Рабочисем пурăнмалли çуртсенче те йĕркелĕх çителĕксĕр.

Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви МТС-а начар пулăшать. Декабрь уйăхĕнче инженер Бунявский юлташ пулчĕ. Вăл механизаторсене узловой меслетпе мĕнле ĕçлемеллине кăтартса парас вырăнне: «Сирĕн механиксем хăйсемех лайăх пĕлеççĕ» тесе хăварчĕ. Январĕн 5-мĕшĕнче инженер Долганов юлташ пулчĕ. Анчах вăл юсав ĕçĕпе интересленмерĕ, çав кунах МТС-ран тухса шăвăнчĕ.

Ишлей МТС-че механиксем вырăнĕнче бригадирсем, трактористсем ĕçлеççĕ. Техникум пĕтернĕ пĕр механик та çук. Главнăй механик Сударев юлташ та комбайнерсен курсĕнчен кăна вĕренсе тухнă. Механиксен пĕлӳ çителĕксĕр пулнă пирки юсав ĕçне кирлĕ пек йĕркелеме хĕнтерех. Çавăнпа та Ялхуçалăх министерстви инженерĕсен, вырăнта пулнă чухне, ĕçе организацилеме конкретлă пулăшу пама тăрăшмалла.

МТС-ри стационарнăй двигатель ĕçлеменни çинчен те тахçанах пĕлеççĕ. Тракторсене юсас ĕçре кая юлма пуçласан тин Шупашкартан электроэнерги парас ыйтăва татса пама май килчĕ.

Пирĕн мастерской, 1936 çулта йывăçран тунăскер, кĕçех йăтăнса анас пек ларать. Унта оборудование вырнаçтарса лартма вырăн та сахал, комбайнсене, молотилкăсене кӳртме те май çук. Çавăнпа çак машинăсене юсассине ирĕксĕрех çуллахи кунсене хăварма тивет.

В. МАЛЫШЕВ,

Ишлей МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ.

## Колхоз председателĕсен ялан ĕçлекен семинарĕ

КАНАШ. Çак кунсенче колхоз председателĕсен ялан ĕçлекен семинарĕн занятийĕ пулса иртрĕ. Унта колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем иртттересси çинчен КПСС райкомĕн секретарĕ И. С. Чернов юлташ доклад туса пачĕ.

«Производствăллă бригада—ĕçе организацилемелли тĕп форма» темăпа районти ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ К. П. Лебедев юлташăн докладне итлесе сӳтсе яврĕç.

Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисенче учетпа отчет ĕçне йĕркелесси çинчен районти ялхуçалăх пайĕн главнăй зоотехникĕ Ермолаев юлташ доклад туса пачĕ.

Колхоз председателĕсем çак докладсене тимлĕн итлерĕç, тĕрлĕрен ыйтусем парса ыйтса пĕлчĕç, хăйсен ĕç опычĕ çинчен каласа пачĕç.

П. КРАСНОВ.

## Шкулти музей

ЭЛЕК. Вутланти çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсем икĕ çул каярах шкулта музей тума тытăннă. Вĕсем музее пуянлатсах пыраççĕ. Унта шкул ачисемпе вĕсен ашшĕ амăшĕсем çеç мар, сывăхри ялсенчи шкул ачисем, колхозлă ялти интеллигенци тата колхозниксемпе колхозницăсем пырса кураççĕ.

Музейре вĕсен кайăксен кӳлепписем пур. Уйрăм читлĕх ăшĕнче ту сĕленĕ пурăнать. Вăл халĕ курăк ăшĕнче çывăрать, çуркунне вăранать.

Шкул ачисем çулла, 31 тĕслĕ вĕçен кайăк çăмартисене тупса музее хунă. Вĕренекенсем пурçăн хурчĕпе интересленнĕ Кăçал вара пурçăн хуртне чĕрĕллех тупса музее вырнаçтарнă.

Музейре ятарласа тискер кайăксен кĕтесне йĕркеленĕ. Унта кашкăр, тилĕ, мулкач, пăсара, пакша пуç шăммисем, слонăн асав шăлĕ, мамонт шăлĕ тата ыттисем те пур.

Нумаях пулмасть вĕренекенсем кив укçасем пухса коллекци турĕç. Унта 1782-мĕш çултан пуçласа 1947 çулхи укçа реформиччченхи хут укçасемпе вак укçасем пур. Вак укçасем хушшинче I-мĕш Петĕр патша вăхăтĕнчи укçасем те нумай.

Музее йĕркелес тата ăна пуянлатас ĕçпе вĕрентӳ пайĕн заведующийĕ К. Воронов юлташ тăрăшса ĕçлет.

Икĕ çул каялла К. Воронов «Пионерская правда» хаçатра шкул çумĕнче музей йĕркелеме пуçлани çинчен статья пичетленĕ.

Çакăн хыççăн ун патне шкулти музейре мĕн пурри тата малалла музее пуянлатма мĕн тума шухăшлани çинчен ыйтса Чехословакири Кладно хулинчи пионерсем çыру янă. Вĕсем хушшинче туслă та ăшă çыхăну пуçланнă. Чехословакири пионерсем нумаях пулмасть Вутланти пионерсем патне фотоӳкерчĕксем ярса панă.

Вĕренекенсем фотоӳкерчĕксенчен пысăк альбом турĕç. Инçетри туссенчен илсе вуланă çырусене тирпейлĕ сыхласа усраççĕ.

Вĕренекенсен шкулти музейĕ шкул ачисене çутçанталăка, географие, историе тата ытти предметсене тĕплĕн вĕренме пулăшать.

Г. МАЛЬЦЕВ.

## Кино кăтартас ĕç лайăхланать

КАЛИНИНО. Районта кино кăтартас ĕç чылай лайăхланчĕ. Хăçан мĕнле фильмсем пулассი çинчен темиçе кун малтан тĕплĕн пĕлтерсе тăраççĕ.

Стационарнăй установкăн аслă механикĕ В. Корчагин юлташ йĕркеленипе кинопередвижкăсенче ĕçлекен киномеханиксем уйăхра икĕ хутчен теориллĕ тата практикăллă занятисем иртттереççĕ. Çамрăксенчен киномеханиксем вĕрентсе хатĕрлеме ятарласа занятисем пулаççĕ.

Е. Матвеев, Г. Тимофеев, И. Андреев комсомолец-механиксем ялсенче çĕнĕ кинофильмсем кăтартас ĕçе пысăк ăсталăхпа туса пыраççĕ.

Киномеханиксем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Ăмăрту итогĕсене кашни виçĕ кунта пăхса тухаççĕ. Малтанхи итогсем тăрăх ăмăртура В. Корчагин пĕрремĕш вырăнта, И. Андреев иккĕмĕш вырăнта пыраççĕ.

М. ПЕТРОВ.

# Полиграфи предприятийĕсенче ăмăртăва вăйлатар

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезĕчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче илемлĕ литературăпа наука литератури, учебниксем, журналсем тата хаçатсем кăларас ĕçе чылай ӳстерме палăртрĕ. Çавна май полиграфи промышленноçне аслăлатмалла, кĕнекесене лайăх та илемлĕ пичетлесе кăлармалла Республикăри полиграфи промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем съезд решенийĕсене тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тата иртттерсе тултарассишĕн хăйсен вăй-халне шеллемесĕр кĕрешме пулчĕç.

1952 çулта типографисем çĕнĕ машинăсемпе станоксем нумай туянчĕç. Типографисенче ĕçлеме çамрăк специалистсем чылай килчĕç. Кадрсен ăсталăхĕпе пуçарулăхĕ ӳсет. Съезд хыççăн типографисенче социализмлă ăмăрту чылай вăйланчĕ. Стахановецсем, производство новаторĕсем продукци пахалăхне лайăхлатмă, материалсене перекетлеме пулăшакан çĕнĕрен те çĕнĕ ĕç меслечĕсем тупма тăрăшаççĕ Юлашки вăхăтра уйрăм типографисем кĕнекесемпе журналсене тата хаçатсене илемлĕрех те пахарах кăларма тытăнчĕç Ĕççыннисем «Ылтăн çăлтăр кавалерĕ», «Летчиксем», «Çул» ятлă кĕнекесене тата ыттисене паха кăларнă тесе, хак параççĕ. Шупашкарти тата Улатăрти типографисем иккĕмĕш çул ĕнтĕ Мускаври издательствăсен — Физкультурăпа спорт издательствин тата Машгизăн заказĕсене пурнăçлаççĕ.

Рабочисемпе служащисен творчествăллă активлăхĕ ӳссе пынипе, социализмлă ăмăрту вăйланса пынипе пула республикăри полиграфи промышленноçĕ 1952 çулхи производство планне пĕтĕмпе 103 процент тултарчĕ. Улатăр, Канаш, Вăрмар типографийĕсем т. ыт. те—пурĕ 13 типографи—çулталăкри плана срокчен тултарчĕç.

Анчах республикăри нумай типографисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пурха. Чурачăкри тата Комсомольскинчи типографисем хаçатсене илемлĕ пичетлесе кăлармаççĕ, хаçатра фотоӳкерчĕксем япăх тухаççĕ. Шупашкарти типографи хăшпĕр чăвашла учебниксене япăх пичетлесе кăларчĕ, çавăншăн ăна хаçатсенче тĕрĕс критиклерĕç. Кунта ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен, çавăнпа пичет машинисем час-часах ахаль нумай лараççĕ. Чылай предприятисенче малта пыракан коллективсемпе стахановецсен опычĕпе япăх усă кураççĕ, перекетлĕхшĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн тимлĕ кĕрешмеççĕ.

Партипе правительство полиграфи промышленноçне аталантарассишĕн, ăна малта тăракан техникăпа хĕçпăшаллантарассишĕн пĕрмай тăрăшаççĕ. 1953 çулта республикăри типографисем валли çĕнĕ машинăсем тата тĕрлĕ оборудовани пурĕ 400 пин тенкĕлĕх ытла кӳрсе килме палăртнă.

Коммунизм строительствин задачисене пурнăçлас ĕçре социализмлă ăмăртăвăн пĕлтерĕшĕ пысăккине пурте пĕлеççĕ. Нумаях пулмасть правительство полиграфи предприятийĕсенче социализмлă ăмăртăва вăйлатасси çинчен ятарласа решени йышăннă, ăмăрту условийĕсене çирĕплетнĕ. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсовет ăмăртура мала тухнă типографине пама вусса çурекен Хĕрлĕ ялав тунă тата преми уйăрнă. Ăмăртура кам мĕнле вырăн йышăннине кашни кварталта тишкерсе тухма палăртнă.

Типографисен коллективĕсем çак çĕнĕ хыпара чун-чĕререн савăнса кĕтсе илчĕç. Вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе чылай типографисенче çĕнĕ обязательствăсем йышăннă. Типографисенчи партипе профсоюз тата хуçалăх организацийĕсен производство планне çирĕплетнĕ ассортимент тата техникăпа экономикăллă кăтартусем тăрăх тăтăш тултарса пымалла тăвас пулать. Уйрăмах производство культурине ӳстересси, хаçатсемпе журналсен тата кĕнекесен пахалăхне лайăхлатасси, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетесси çине тимлĕ пăхни кирлĕ.

Кăçалхи январь уйăхĕнче хăшпĕр типографисем пĕр тикĕс ĕçлеймерĕç. Типографи руководителĕсен хăйсен ĕçĕнчи ответлăхне ӳстермелле, шалти резервсемпе туллин усă курма, рабочисен творчествăллă активлăхне вăйлатса пыма тăрăшмалла Кашни рабочи социализмлă ăмăртăва хутшăнтăр, ĕç нормине куллен ăнăçлă тултарса пытăр.

1953 çулхи плана срокчен тата иртттерсе тултарассишĕн, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе премине илме тивĕçлĕ пулассишĕн типографисен коллективĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарса пырар.

П. КАПИТОНОВ,

Чăваш АССР Полиграфи промышленноçĕн, издательствăсен тата кĕнеке суту-илĕвĕн управленийĕн начальникĕ.

## Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

КПСС Сĕрпӳ райкомĕ «Хаçат витринисем çинчен» ятлă çырура çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани, райисполкомпа райпотребсоюзри парторганизацисен секретарĕсене çĕнĕ витринăсем тума хушни çинчен пĕлтерчĕ.

Ытти учрежденисемпе организацисен хаçат витринисене йĕркелес енĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă.

* * *

Октябрьски райисполкомĕн ялхуçалăх пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ ярса панă çырăва «Новая жизнь» колхоз правленийĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă. Правлени çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă—сурăх витине юсаттарнă, начăртарах сурăхсене уйрăммăн тăрантарма тытăннă. Çителĕклĕ ĕçлесе пыманшăн сысна ферми заведующине Лукина вырăнтан кăларнă.

Начартарах пăрусене те уйрăммăн тăрантарма пуçланă.



Китай Халăх Республики. Нумай пулмасть Харбин хулинче йĕтĕн пир-авăр чĕртекен фабрика ĕçлеме пуçланă.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çĕнĕ фабрикăн пĕр цехĕнче.
СИНЬХУА АГЕНТСТВИН фотоÿкерчĕкĕ.

# Хĕвелтухăç Китайра ялхуçалăхĕнче тунă çитĕнÿсем

ШАНХАЙ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Цзефанжибао» хаçат çапла пĕлтерет: ĕнер Шанхайра Хĕвелтухăç Китайри ялхуçалăхĕнче малта пыракансен конференцийĕ уçăлнă. Конференци ĕçне пысăк ÿсĕмлĕ тырпул ĕстисем 116 çын хутшăнаççĕ. Делегатсем хушшинче пĕр-пĕрне пулăшу паракан ĕçлĕх ушкăнĕсен руководителĕсем, ялхуçалăхĕнчи производство кооперативĕсен председателĕсем, госхоз директорĕсем пур.

Ĕнер Шанхайри Халăх площадĕнче Хĕвелтухăç Китайри ялхуçалăх выставки уçăлнă. Выставка хресченсем Хĕвелтухăç Китайри уй-хирсенче мĕнле майпа пысăк тухăçлă тырпул ÿстернине кăтартса парать. Çак районта пĕтĕм çĕршывĕнче пухса илекен тырпулăн тăваттăмĕш пайне туса илеççĕ.

Хĕвелтухăç Китай пурçăнпа, чейпе, çĕмăртапа, шăртпа чапа тухнă. Хĕвелтухăç Китайри пулăçсем çулсерен çĕршер пин тонна пулă тытаççĕ. Чжэцзян, Аньхуэй, Фуцзян провинцийĕсен сăрт-туллă районĕсенче строительствăна юрăхлă тĕрлĕ йышши хаклă йывăççем ÿсеççĕ.

Ирĕклĕ пурнăçăн çулĕсенче Хĕвелтухăç Китайри хресченсем ялхуçалăхне аталантарас ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунă.

Уйрăмăнах 1952 çулта пысăк çитĕнÿсем тунă. Иртнĕ çулта планпа палăртнинчен тĕштырă 18,3 процент, çĕр мамăкĕ—39,3 процент ытларах пухса кĕртнĕ. Хальхи вăхăтра вăрçăччenхи шая çитнĕ кăна мар, унтан иртсе кайнă. Тĕштырăсемпе техникăллă культурăсен тухăçлăхĕ чылай ÿснĕ.

Иртнĕ çулта пĕр-пĕрне пулăшакан ĕçлĕх ушкăнĕсене тата ялхуçалăхĕнчи производство кооперативĕсене Хĕвелтухăç Китайри хресчен хуçалăхĕсен 46,5 проценчĕ кĕнĕ. Хĕвелтухăç Китайра ялхуçалăх производство кооперативĕсем пурĕ 576 шутланаççĕ.

# Польшăра учительсем хатĕрлеççĕ

ВАРШАВА, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Варшавăра аслă педагогика училищисен руководителĕсен конференцийĕ вĕçленнĕ. Польша Халăх Республикин Çутĕç министрĕн заместителĕ Генрих Яблоньский «Наци фрончĕн программипе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн кăтартăвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе аслă педагогика училищисем умĕнче тăракан задачăсем» çинчен доклад туса панă.

Конференци аслă педагогика училищисем вăтам шкулсем валли преподавательсен кадрĕсене хатĕрленĕ çĕрте чылай çитĕнÿсем тунине палăртнă.

Кăçал училищĕсем вăтам шкулсем валли 1.200 учителе яхăн вĕрентсе кăлараççĕ. Ку вăл юлашки тăватă çул хушшинче хатĕрленĕ учительсен хисепĕ чухлĕ пулать.

Конференци участникĕсем хăйсен сăмахĕсенче çакна палăртнă: И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ, КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, çавăн пекех наци фрончĕн программи Польшăра вăтам пĕлÿ парас ĕçе аталантармалли çул-йĕре кăтартса параççĕ. Наци фрончĕн программи тăрăх пысăк хуласемпе промышленность центрĕсенче пурăнакан ачасене 1960 çултан пуçласа обязательнăй йĕркепе вăтам пĕлÿ пама палăртнă. Çак программăна пурнăçлас тесен, пысăк квалификациллĕ учительсем 18 пин çынна яхăн кирлĕ. Учительсен çак хисепĕн пысăк пайне аслă педагогика училищисен хатĕрлемелле.

### «БИРМĂРИ РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН ПАРТИЙĔН» ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ПАРИЖ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Рангунран пĕлтернĕ тăрăх, «Бирмăри рабочисемпе хресченсен партийĕ» заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: гоминдановецсем Бирмăри çарĕсен агрессийĕ США планĕн пĕр пайĕ пулса тăрать. Çав план тăрăх США Бирмăран çар бази туса хурасшăн.

# Сталинград патĕнче çĕнтерÿ тунăранпа 10 çул çитнĕ май ют çĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

**ДАНИ**

КОПЕНГАГЕН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Çарĕ Сталинград патĕнче историллĕ çĕнтерÿ тунăранпа 10 çул тултарнă май «Ланд ог фольк» хаçат главнăй редактор Берг Хоуманн çырнă «Сталинград» ятлă статьяна пичетлесе кăларнă.

Статья авторĕ çапла çырать: Гитлерпа Германин монополистла империализмĕ пĕтĕм тĕнчипе пуç пулса тăма ĕмĕтленни Сталинград патĕнчи çапăçура ĕмĕрлĕхех путланса ларнă. Сталинград патĕнчи çапăçу фашизма хирĕç пыракан аслă кĕрешÿре татăклă улшăну туни пулнă. Вăл социализмăн никам çĕнтерейми вăйне палăртакан символ пулса тăчĕ.

«Çавăнпа та Гитлер ĕçне малалла туса пыракан çынсем,— тенĕ статьяра,— мĕнпур çĕршывсенчи реакционерсем тата вĕсене ертсе пыракан Америкăн вăрçă чĕртекен çыннисем Сталинград пĕлтерĕшне чакарма, халăхсене Сталинград çинчен асăнма чарма хăтланаççĕ. Анчах вĕсем ун пек тăваймĕç. Паян миршĕн кĕрешекен мĕнпур тÿрĕ кăмăллă çынсем, наци тата политика тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ шухăш-кăмăл тытнине пăхмасăр, Сталинграда паттăррăн хÿтĕлени çинчен хисеплесе асăнаççĕ». Хаçат Совет художникĕн К. Финогеновăн ÿкерчĕкĕсене пичетленĕ, унта историри чи пысăк çапăçусенчен пĕрин эпизочĕсене кăтартса панă.

**ИТАЛИ**

РИМ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Италири мĕнпур прогрессивлă хаçатсем Сталинград патĕнче çапăçу пулнăранпа 10 çул тултарнине паллă тăваççĕ. Сталинград патĕнче пулнă çĕнтерÿ гитлерла захватчиксене хирĕç пынă вăрçăра татăклă улшăну тунине кăтартса парса, «Унита» хаçат совет халăхĕ вăрçă хыççăнхи тапхăрта çĕршыва ÿсас тата коммунизм тăвас ĕçре питĕ пысăк çитĕнÿсем тунине палăртать. «Эпир,— тесе çырать юлашкинчен хаçат,— совет çыннисемпе юнашар тăратпăр. Вĕсен тĕллевĕсем — пирĕн тĕллевсем. Вĕсен тăшманĕсем—пирĕн тăшмансем. Вĕсен çулпуçĕ—пирĕн учитель. Вĕсем мир ĕçĕшĕн ĕçлеççĕ, эпир миршĕн кĕрешетпĕр».

«Аванти» хаçат çакна кăтартса парать: Сталинград паттăрĕсем пĕтĕм тĕнчери халăхсене фашистла пусмăрлăхран çăлса хăварчĕç.

«Эпока» ятлă реакциллĕ журнал Сталинград патĕнчи çапăçу çинчен нумай фотографисем пичетлесе кăларнă. Ÿкерчĕксене: «Вăрçăра татăклă улшăну тунă çапăçу» ятлă заголовокпа пичетленĕ.

**БЕЛЬГИ**

БРЮССЕЛЬ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Драпо руж» хаçат хăйĕн паянхи передовой статьинче Совет Çарĕ Сталинград патĕнче историллĕ çĕнтерÿ тунăранпа 10 çул тултарни çинчен çырнă.

Сталинград патĕнчи çапăçăвăн пĕлтерĕшĕ, тенĕ статьяра, пурне те лайăх паллă.

Сталинград пĕтĕм тĕнчене совет строительствин тĕлĕнмелле ытти стройкисенчен çÿлте тăнине, совет граждансен тĕлĕнмелле паттăрлăхне, чаплăран та чаплă сталинла стратегие кăтартса панă.

Сталинград вăл тăшмана аркатса тăкнă Совет Çарĕн символĕ пулса тăчĕ.

Вăрçăпа ишĕлтернĕ Сталинграда тепĕр хут юсанă.

Совет халăхĕ миршĕн тăрать тата питĕ пысăк строительство туса пырать.

Пирĕн халăх та çавăн пекех миршĕн тăрать. Вăл совет халăхĕ Сталинград патĕнче тунă аслă çĕнтерÿ çинчен манма пултараймасть, вăл ун çинчен манас çук!

# Корейăри ĕçсем

### ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ февралĕн 2-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче паллă улшăнусем пулман. Халăх çарĕн тата Китай халăх доброволецĕсен соединенийĕсем тăшмана хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

### АНГЛИРЕ 1952 ÇУЛТА ПУЛНĂ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çул Англири ĕççыннисем хăйсен прависемшĕн активлă кĕрешнипе паллă пулнă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ, пĕчĕклетсе кăтартнă сведенисем тăрăх (вĕсенче вунă çынтан каярах хутшăннă забастовкăсене тата пĕр кунтан сахалгарах пулнă забастовкăсене шута илмен), 1951 çулта забастовкăсене пула промышленноçра 1.694 пин ĕç кунĕ сухалнă пулсан, 1952 çулта вара—1.793 пин ĕç кунĕ çухалнă. Забастовкăсене пурĕ 416 пин рабочи хутшăннă. 1951 çулта 379.000 рабочи хутшăннă пулнă.

### ГИТЛЕР ГЕНЕРАЛĔСЕМ БОННРИ ПЫСĂК ВЫРĂНСЕНЧЕ

БЕРЛИН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак эрне вĕçĕнче Бонра çакă паллă пулнă: Бонри çар ведомствинче аслă офицерсен вырăнĕсене кандидатсем тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет руководителĕ пулма Гитлер çарĕн генерал-лейтенанчĕ пулнă Кунцена уйăрса лартма палăртнă. Пĕлтернинче çакна кăтартса панă: 1935 çулччен Кунцен Гитлерăн хĕçпăшалсемпе боеприпассен министерствинче кадрсен пайĕн руководителĕ, ун хыççăн çар корпусĕн командирĕ пулнă.

# Голландире шыв илни

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Гаага хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: тинĕс хĕррипе шывран хÿтĕлеме тунă дамбăсене тинĕс çинчи питĕ вăйлă тăвăл темиçе çĕрте ишĕлтернĕ. Çавăн пирки тинĕс хĕрринчи хуласене тата тырпул акмалли пысăк района шыв илнĕ. Çавна пула паян Голландин кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи нумай районсенче чрезвычайнăй положени туни çинчен пĕлтернĕ.

Роттердам хули—Голландири чи пысăк хуласенчен пĕри. Ăна, шыв илнине пула, пысăк сиен кÿнĕ. Виллемстад, Дордрехт, Стелендам тата Розенбург хулисенче, Çурçĕр Брабант, çавăн пекех Кăнтăр-Хĕвеланăç Голландири ытти чылай хуласенче те чрезвычайнăй положени туни çинчен пĕлтернĕ. Айлăмра вырнаçнă районсенчи мĕнпур суртсем шыв айне пулнă. Шыв хушăнсах пырать. Шыв питĕ пысăк сиен кÿнĕ. Газ тата электричество пама пăрахнă, телефон çыхăнăвĕ пăсăлнă.

Тексель утравĕ çинчи Оудесхильдри шлюз хапхисене шыв юхтарса кайнă, утрава шыв илнĕ. Тексель утравĕ çинчи лару-тăрăва «шанчăксăр» тесе шутлаççĕ.

Голландие кÿнĕ сиен, çĕршывĕнех шутласан, темиçе миллион гульдена çитет пулмалла. Ку сиен—дамбăсемпе суртсене ишĕлтернинче, выльăхсем пĕтнинче кăна мар, тăвар лекнĕ пирки тăпра пăсăлнинче те пулать.

Малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх, шыв Голландин хĕвеланăç пайĕнчи Рейн тата Шельда юханшывĕсен дельтисенче пысăк сиен кÿнĕ. Мелиссанте ятлă пысăк мар хулара шыв пĕве урлă кĕрлесе юхма пуçланă, района шыв илнĕ. Çĕрулмие тата выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленĕ апата шыв юхтарса кайнă, электроэнерги пама пăрахнă. Зуид-Бейерландра шывран хÿтĕлекен дамбăна виçĕ çĕртен çĕмĕрнĕ.

Каярахпа Мааслуйсран пĕлтернĕ тăрăх, ку хулан пристань районне шыв илнĕ. Урамсенче 2 метр тарăнăш шыв тăрать. Вееере сывăхĕнче тинĕс шывĕ дамба шăтнă вырăнтан кĕрлесе юхма тытăннă. Утрав çинчи çак пĕчĕк хулана пĕтĕмпех шыв илнĕ. Арнемюден тата Ритхем хулисем те шыв айĕнче. Поездсем çÿреме чарăннă.

Илнĕ сведенисем тăрăх, шыв илнине пула 35 çын вилнĕ, анчах вилнисен хисепĕ чылай нумайтарах пулĕ тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Гаага хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтернĕ: тинĕс çинчи питĕ вăйлă тăвăл паян Голландири çыран хĕрринчи дамбăсене, тинĕсри шывран хÿтĕлесе тăраканскерсене, çĕмĕрнĕ. Тинĕс хумĕсем çынсене, выльăх-чĕрлĕхе юхтара-юхтара кайнă, суртсене ишĕлтернĕ. Ку вăл Европăра 100 çул хушшинче пулнă чи хăрушă катастрофăсенчен пĕри. Паян каçхине лару-тăру татах йывăрланнă, мĕншĕн тесен прилив пулнă пирки хушăнса пыракан шыв дамбăсенчи çĕмĕрлнĕ вырăнсенчен юхма пуçланă. Çĕмĕрлнĕ вырăнсен сарлакăшĕ 100 ярда çитет. Шыв тулнă пирки пиншер çынсем хăйсен суртĕсене пăрахса кайнă. Юлашки сведенисем тăрăх, 60 çын вилнĕ. Анчах вилнисен хисепĕ, илсе кăтартнă хисепрен чылай нумайрах пулĕ тесе шутлаççĕ.

Паян 17 сехетре (Гринвич вăхăчĕпе) прилив пуçланнă. Çавна пула лару-тăру йывăрланнă. Мĕншĕн тесен шыв дамбăсем ишĕлнĕ вырăнсенчен хытă юхма пуçланă. Çĕмĕрлнĕ вырăнсем аслăлансах пыраççĕ.

### Индири выçлăх

ДЕЛИ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейшнл геральд» хаçат çапла пĕлтерет: Мадхья Прадеш штатĕнчи 3.086 ялти 1.350.000 хресчен ытла выçăпа аптраççĕ. Ялсенче шыв çитмест. Хресченсем хăйсен ялĕсене пăрахса каяççĕ.

# СССР чемпионĕн ятне илессишĕн

Шахмат енĕпе СССР чемпионĕ ятне илессишĕн пыракан ăмăртура февралĕн 2-мĕшĕнче пиллĕкмĕш партие выляна.

Ку вăйăра Тайманов гроссмейстер питĕ лайăх вылямa пултарнине кăтартса панă. 13-мĕш хут çÿренĕ чухне Ботвинник пысăк йăнăш тунă. Тайманов ăна хĕссех пынă. Çапла майпа вăл Ботвинника çĕнтернĕ.

Çапла майпа, пилĕк партии выляннă хыççăн М. Ботвинникăн 3 очко, М. Таймановăн—2 очко.

Февралĕн 4-мĕшĕнче шахмат енĕпе СССР чемпионĕн ятне илессишĕн пыракан ăмăртăвĕн улттăмĕш партине иртереççĕ.

(ТАСС).

## *Молотов облаçĕнчен çыраççĕ*

Иртнĕ икĕ çул хушшинче Тăвай районĕнчи колхозсенчен Молотов облаçне 50 хуçалăх куçса кайнă. Унта Хрущев ячĕпе, Маленков ячĕпе, Сталин ячĕпе, «Красное Сормово» тата ытти колхозсенчен те кайнă.

«Красное Сормово» колхозран кайнă М. Лазарев юлташ çапла çырать: «Кунгурлес» трестне çитсен икĕ уйăхранах мана вăрманпромхоз дирекцийĕ шоферсен курсне вĕренме ячĕ. Эпĕ 6 уйăх вĕрентĕм. Вĕреннĕ чухне хама та, çемьене те çителĕклĕ таран укçа парса тăчĕç. Шофер профессине илнĕ хыççăн, эпĕ вăрманта ĕçлеме тытăнтăм. Халĕ автомашинăпа йывăç турттаратăп. Манăн кашни уйăхри ĕç укçи 1.500 тенкĕ таран пулать.

«Эпĕ электропăчкăпа вăрман касатăп,—тесе çырать Маленков ячĕпе тăракан колхоз членĕ пулнă В. Никитин юлташ,—пур енчен те лайăх пурăнатăп. Манăн ĕне тата ытти выльăхсем те пур. Вĕсене усрама апат çителĕклĕ. Магазинсенче тавар нумай. Пирĕн кунта шкул, клуб, больница пур».

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕ пулнă Г. Медведев юлташ куçса кайсан 5—6 уйăхранах хăйне валли пÿрт лартнă. Пÿрт лартма государство пысăк пулăшу панă. Медведев юлташ вагон çине йывăç тиенĕ çĕрте ĕçлет.

Молотов облаçĕ «симĕс ылтăнпа» пуян область. Кунти вăрмансенче хатĕрлекен йывăç коммунизмăн аслă стройкисене питех те кирлĕ.

Тăвай районĕнчен кăçал та нумай колхозсенчен Молотов облаçĕнчи вăрманпромхозне куçса каяççĕ.

А. ВИКТОРОВ.

### РСФСР-ти хуласем хушшинче телеграф тăрăх иртterекен шахмат турнирĕ

Паян РСФСР-ти хуласем хушшинче телеграф тăрăх иртterекен 5-мĕш шахмат турнирĕ пуçланать. Иртнĕ çулхи турнирта Шупашкар шахматисчĕсем тăваттăмĕш вырăна тухнă. Ăмăртăва вĕсем кăçал та «А» класри шахматистсем пулса хутшăнаççĕ.

Хальхинче вĕсем шурă фигурăсемпе—Свердловск, Саратов, Новосибирск, Керчь хулисенчи, хура фигурăсемпе — Молотов, Челябинск тата Сочи хулисенчи шахматистсемпе выляççĕ.

Ăмăрту мĕнле пынине сăнаса тăма, «Искра» спорт обществи клубĕ патĕнче ятарлса витрина тунă.

# Ача-пăча калавĕсем пирки

## („Ялав" журнала пăхса тухнă май)

Ача-пăча валли çырнă чăвашла калавсем, пурте тенĕ пекех, малтан «Ялав» журналта пичетленеççĕ. Тÿрех калас пулать: юлашки çулсенче пирĕн илемлĕ литература журналĕнче лайăх калавсем сайра курăнма пуçларĕç; тепĕр чухне «нимĕн çукран—нимĕр» тенĕ пек, пиçсе çитеймен произведенисенех вулакансене сĕнни пулкалать. Мĕнрен килеть-ха ку? Паллă писательсенчен чылайăшĕ темиçе çул хушши «Ялава» ним те çырса памарĕç. Сăмахран, 1952 çулта «Ялав» журналта пичетленнĕ калавсен авторĕсем пурте çамрăксем теме пулать. Пирĕн журналти проза пайĕ çамрăксен калавĕсем çинче кăна тытăнса тăрать тесен—пĕрре те йăнăш пулмасть. Пĕр енчен шутласан, ку лайăх ĕнтĕ: литература ĕçне çĕнĕ авторсем йышлăн хутшăна пуçларĕç. Анчах кунта тÿнтерле енĕ те пур: журналта пичетленекен калавсен пахалăхĕ сисĕнмеллех чакрĕ, журналăн хăшпĕр номерĕсем питĕ кая юлса, е кичемрех, чухăнрах пулса тухрĕç. Çакă вăл пĕтĕмпех пирĕн пултаруллă писательсем «Ялав» журнал пахалăхне ÿстерессишĕн сахал тăрăшнинчен килчĕ.

Ача-пăча валли çырнă çĕнĕ калавсенчен чи малтанах А. Лазарева калавĕсене палăртмалла. Асталăх енчен вĕсем ыттисем хушшинче лайăхрах. Анланмалла, уçăмлă чĕлхепе çырнă кĕске калавсем. «Савăнăç» калавра пултаруллă совет ачисен телейлĕ пурнăçне, вĕренĕвне, савăнăçне кăтартнă Пионерсен концертĕнче Тоня Борисова отличница вырăс халăх юррисене ăста юрласа парать. Ăна итлесе ларакан амăшĕ çав самантра хăйĕн иртнĕ пурнăçне аса илет: вăл ĕлĕк сукăр амăшне ялтан яла çавăтса çÿренĕ, вĕренесси çинчен шутлама та пултарайман. Октябрь революцийĕ çес амăшне кăтартас ĕмĕтне пурнăçа кăтартать; ăна халĕ унăн телейлĕ ачи, Тоня, хăйĕн пултаруллăхĕпе амăшне савăнтарать...

«Тантăшсем» калавра шкул çулне çитмен ачасем мĕнле выляннине çеç кăтартнă темелле, анчах кунта пысăк шухăш пур. Ачасем «лашалла» та, «тăрналла» та мар, «Атăлпа Дон каналĕ тумалла» выляççĕ! Ÿссе çитсен, кашниех инженер е капитан, учитель е танкист пулма ĕмĕтленет. Автор ачасен психологине çывăх пĕлсе тăни сисĕнет. Виççĕмĕш калавра («Самолет сасси») сюжет линийĕ те пур пек, çапах та калав малтанхисенчен кичемрех, вăрăмрах. Кунта пĕчĕк Вова самолет моделĕ тума ĕмĕтленнине, унтан вăл çав моделе тунине кăтартасшăн пулнă. Шухăшĕ лайăх пулин те, калавра чĕрĕ картинăсем, образсем çук, вăл схема пекрех кăна туйăнать. Лазаревăран лайăхрах калавсем кĕтес килет.

Литература ĕçне юлашки икĕ çулта хутшăнма пуçланă çамрăк авторсенчен И. Михайловпа В. Ухлине асăнмалла. Иккĕшĕ те ача-пăча калавĕсем çыраççĕ. В. Ухли, хăй педагог пулнăран, шкул ачисен пурнăçĕпе вĕренĕвĕ çинчен ытларах çырать. «Пулăшрĕç» калавра вăл совет пионерĕсем хушшинчи туслăх çинчен юратса калать. Ира япăх вĕренме тытăнать, унăн питĕ пысăк хуйхă: ашшĕ фронтра вилнĕ, амăшĕ чирлĕ выртать. Звенори пионерсем, çакна пĕлсен, Ирăна килти ĕçе тирпейлеме те, вĕренме те пулăшаççĕ. Ку калава хăллĕхе илемлĕ произведени теме çук-ха, мĕншĕн тесен автор схематизм тыткăнĕнчен тухайман. Калавра асăннă ачасен пĕрин те индивидуальнăй енĕсем курăнмаççĕ. Схемăлла çырса кайни, илемлĕ литература спецификине тĕплĕн ăнланса илейменни И. Михайлов калавĕсенче те сисĕнет. Акă, сăмахран, «Ĕмĕт тулать» калава илер. Кунта автор чăваш çамрăкĕсем ФЗО шкулне вĕренме кайнине кăтартасшăн пулнă. Çамрăк шахтер Гриша яла отпуска таврăнать те хăйĕн тантăшĕсене ФЗО шкулне вĕренме каймашкăн чĕнет. Халиччен ФЗО шкулĕнчен хăраса пурăннă Урине инке те хăй ачине, Алешкăна, ФЗО-на яма килĕшет. Чи малтанах инкене унта шалу мĕн чухлĕ пани, апат мĕнле çитерни хытă интереслентерет. Çакна çырса кăтартнă чух автор ытлашши тăрăшнă темелле, анчах калавăн кульминацийĕ тĕлне çитсен, калама çук вăйсăр, схемăллă çеç çырса кайнă. Акă, Урине инке кăмăлĕ çавраннине кăтартнă вырăн:

— Гриша, мĕнле-ши?..— пăртак шухăша кайса ларнă хыççăн ыйтрĕ Урине аппа.—Шутласан, халĕ колхозра та пурнăç лайăх та... Кайма кирлех-ши!

— Эх, Урине аппа, çакна асту-ха: пирĕн çĕршыв кунтан-кун чечекленсе, вăйланса пырать. Çĕршер заводсем, фабрикăсем кунĕн-çĕрĕн чарăнмасăр халăхшăн ĕçлеççĕ. Вĕçе-вĕçĕн поездсем чупаççĕ. Вĕсен çакăрĕ—çĕр кăмрăкĕ. Çĕр кăмрăкĕ вĕсене питĕ те нумай кирлĕ. Эппин, ăна пайтахрах кăларса хатĕрлемелле пулать. Шахтер ĕçĕ чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри, вăл мухтавлă. Çавăнпа эпĕ шахтера вĕрентĕм. Алешкăна та, Урине аппа, çавнах вĕрентмелле. Ĕçлеме халĕ шахтăра хăрушă мар. Ĕлĕк çĕр кăмрăкне кирккăпа чавнă, халĕ—электричество вăйĕпе. Комбайнсем те пур.

— Тĕрĕс, Кĕркури. Хăсăвона Улюшкан та каймаллах. Улюшка, Улюшка! Аçта эс?

— Кунтах, анне,—хĕвел пек çиçсе, тăрс! сиксе тăчĕ Алешка.

Чăн та, Гриша ФЗО шкулĕнчи пурнăç çинчен, тĕрлĕрен халăх ачисен туслăхĕ çинчен каласа пама хăтланать, анчах вăл каланинче пĕр образлă, асра юлмалли вырăн та çук, пур япала çинчен те вăл пĕр пек сăмахсемпе, лăпкăн калать. Гриша калаçăвĕ—пĕрре те çамрăк ача калаçăвĕ мар, пĕр-пĕр япăх доклад еврĕлĕрех туйăнать. Калавра вырăнсăр, усăсăр калаçнисем тем чухлех. Гриша, Алешка, Витя, Толя, Юра—пурте пĕр пек калаçаççĕ, вĕсен кашнине тивĕçлĕ сăнĕ те, калаçăвĕ те, характерĕ те вулаканшăн паллă мар, урăхла каласан, асăннă ачасем—тулли образсем мар, схемăлла персонажсем кăна.

ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем çинчен çырнă калавсем чăваш литературинче çукпа пĕрех, çавăнпа пирĕн çамрăксене ун пек калавсем питĕ кирлĕ. Анчах И. Михайлов калавĕ, паллах, вулакансем ыйтнине, кĕтнине тивĕçтерейместь.

Çамрăк авторăн иккĕмĕш калавĕн теми çĕнех мар, ун пек темăллă калавсем «Ялав» журналта иртнĕ çулсенче пулкаланăччĕ, уйрăмах М. Андреевăн «Çилçунат» ятлă калавне асăнса хăварас килет. Унта Максăм пионер чирлĕ тихана пăхса ÿстернине кăтартса панă. Максăм пĕччен мар, ăна пурте пулăшаççĕ, мĕншĕн тесен вăл хăй чапĕшĕн тесе тăрăшмасть, колхоза лайăх лаша ÿстерсе парас, тет. И. Михайлов çырнă «Вăсса савăнăçĕ» калаври герой пачах урăхла: вăл чи малтанах хăй диплом илсе чапа тухасса ĕмĕтленет. Çав диплома илме ăна пĕр сăлтав чăрмантарать—Орлик ятлă тиха хăй çине утлантармасть. Калавра тăршшĕпех Вăсса тиха çине утланма хăтланнине кăтартнă, ытти çинчен вара ик-виç сăмахпа çеç асăннă. Вăсса пĕчченех. Калав вĕçĕнче çеç шкулти пионерсем те «колхозри тихасене шефа илни» çинчен виçĕ пуплев хушса хунă. Ку, паллах, питĕ çителĕксĕр. Ĕçе кăтартса мар, ун çинчен ахаль кăна каласа кайни—çамрăк авторсен тĕп çитменлĕхĕ.

С. Павловăн «Утмăл тăватă тăваткăл» калавне кăмăлласа вулатăн. Кунта образсем кăштах пурри те, юмор та сисĕнет. Анчах калава вуласа тухсанах кăмălсăр пулатăн. Мĕншĕн? Идеи лайăх: ачасем хирте тăкăннă пучахсене пухаççĕ. Анчах мĕнрен пуçăнаççĕ-ха вĕсем çак ĕçе? Шахмат вăййинчен, «утмăл тăватă тăваткăл юмахĕнчен!» Хĕрÿ ĕç çинче пионерсем сулхăнра шахматла выляса лараççĕ. Колхоз счетовочĕ вĕсене авалхи шахмат юмахне каласа кăтартать те, пионерсем колхоз хирĕнче мĕн чухлĕ тырă тăкăнса юлнине ăнланса илеççĕ—çавăнтах хире пучах пухма каяççĕ. Ирĕксĕрех ыйтас килет: колхоз счетовочĕсĕр пуçне ку ыйтупа урăх никам та интересленмен-ши тата шахмат юмахĕ пулман пулсан, пионерсем хирте тăкăнса юлакан пучахсем çинчен шутламĕччĕç-ши? «Чăнах та ĕнтĕ, мĕнле çавна хамăр тавçăрса илеймен-ха?» тесе тĕлĕнет звено вожатăйĕ. Вулакан та тĕлĕнетех. Кунта калав сюжетне пурнăçран илни мар, автор хăй шухăшласа кăларни курăнсах тăрать. Калав пĕчĕкех мар, анчах унăн виçĕ чĕрĕкне шахмат вăййи çинчен, пĕр чĕрĕкне çеç ĕç çинчен çырнă. Геройсене эпир ĕçре мар, калаçура ытларах куратпăр.

Çулталăк хушшинче «Ялав» журналта пичетленнĕ ача-пăча калавĕсене илсе пăхсан, пирĕн ытлашши мухтанмаллиех ним те çук. Ача-пăча писателĕсем халлĕхе асра юлмалла лайăх произведенисем çыраймарĕç-ха. «Ялав» журналта иртнĕ çулта питĕ сахал калав пичетлерĕç. Литература ăсталăхĕ енчен илсен, вăл калавсем пурте тенĕ пекех питĕ вăйсăр, калама çук чухăн. Вĕсен тематики те анлă мар. Пурнăçри нумай çĕнĕ явленисене пирĕн ача-пăча писателĕсем асăрхамаççĕ. Çамрăк авторсен пĕлÿлĕх те, ăсталăх та сахал-ха. Анчах «Ялав» журнал редакцийĕ час-часах çакна манса, пулса çитмен калавсенех пичетлесе кăларать, çамрăк авторсемпе кирлĕ пек тăрăшса ĕçлеместь.

Çирĕп критика çукки те ача-пăча литературине ÿсме чăрмантарать.

1953 çулта «Ялав» журнал хăй ĕçне лайăхлатасса шанас килет, журналта ытти пахa произведенисемпе пĕрлех, ача-пăча калавĕсем те, повеçĕсем те, пьесисем те йышлă та лайăх пуласса, ача-пăча литературине ÿстерес ĕçе паллă чăваш писателĕсем те хастаррăн хутшăнасса кĕтетпĕр.

Александр АРТЕМЬЕВ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.


Шупашкарти тата республикăри экрансем çинче

„МАЙСКАЯ НОЧЬ"

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Н. В. Гоголь повеçĕ тăрăх ÿкернĕ çак фильмăн сценарине К. Исаев çырнă.

Фильма лартаканĕ — Александр Роу.

Композитор — С. Потоцкий.

Рольсене выляннă артистсем: Н. Досенко, Т. Конюхова, Э. Цесарская, Л. Юдина, А. Хвыля, Г. Милляр, А. Дунайский, Г. Гумилевский, Г. Нелидов, Г. Григорьева, В. Бокарев, А. Жуков т. ыт. те.

Фильма М. Горький ячĕпе тăракан киностуди ÿкернĕ.

Экрансем çине «Главкинопрокат» кăларнă, 1952 ç.

«РОДИНА» КИНОТЕАТРТА

Паян, февралĕн 4-мĕшĕнче, тата малашнехи кунсенче те фильм-спектакль

«ВОЛКИ и ОВЦЫ»

16 тата 20 сехетре пуçланакан сеанссенче пĕрремĕш сери 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче иккĕмĕш сери кăтартаççĕ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 4-мĕшĕнче, вырăсла спектакль

«НЕВОЛЬНИЦЫ»

Ыран, февралĕн 5-мĕшĕнче, чăвашла спектакль

«НАРСПИ»

Эрнекун, февралĕн 6-мĕшĕнче, чăвашла спектакль

«ПАРНЕЛЛЕ ТУЙ»

Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.



РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-09, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантуре—0-28.

Л 00002. Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.